ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

15 (4377) №, 2014, ака, 17 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

## Уява хатĕрленсе

**Кирек епле уява та тăрăшса хатĕрленеççĕ Карапаш шкулĕн хастар вĕренекенĕсем. Акă халĕ вĕсем чăваш чĕлхи кунне чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.**



Çак асамлă кун валли чăвашла сăвăсем, каларăшсем хатĕрленĕ. Кашни кунах хĕрӳ репетици иртет. Илемлĕ тĕрĕсене те альбом листисем çине ӳкернĕ. Ара, ун чухне хăйне евĕр куравирттерме палăртнă-çке.

Иккĕмĕш класри Диана Енцова хăй чăваш пулнишĕн чунтан хĕпĕртет. Чăваш тумĕ тăхăнса сăвăлла юмах калама ăстаскер пысăк уявра та куракана пултарулăхĕпе паллаштарма ĕмĕтленет. Курав валли вĕт шăрçаран тĕрлĕ япала ăсталама тытăннă та вăл.

– Класра хăвăрт вулакансенчен пĕри эпĕ. Çавăнпа уявччен чăваш кĕнекисемпе ытларах паллашасшăн. Кайран вĕрентекене содержани каласа пама та кăмăллă пулĕ, – хăпартланать хĕр пĕрчи.

Ырă кăмăллă Миша Агатеев хăй савăнăçне тăван кил картишĕнчи выльăх-чĕрлĕхĕпе пайлать. Шкултан килмессерен пӳрте кĕриччен вĕсем патне чупать вăл. Кашнине юратса ачашланă май çăкăр татăкĕпе хăналать тусĕсене.

– Акă çитес кунсенче пысăк концерт пулмалла пирĕн. Кун вĕçленсен уяв епле иртнине сире тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартăп. Манăн пултарулăхшăн эсир те хавхаланасса шанатăп, – тет кăмăллăн вĕсем çине пăхса.

«Тетте» журнал вулама юратакан Владлен Алексеев хăй тĕллĕнех пуç ватмăшсем хатĕрлет. Кирек епле ĕçе те ушкăнпа мар, пĕчченех тума кăмăллать.

– Шăплăха чунтан килĕштеретĕп. Ун пек чухне ĕç те кал-кал каять, шухăшлама та ирĕклĕ. Кам та пулин чăрмантарнине юратмастăп. Акă уяв валли пуç ватмăшсем хатĕр. Унччен вăхăт пур-ха, тен, тата мĕн те пулин ăсталаса вĕрентекенпе тус-юлташсене тĕлĕнтерĕп-ха, – тет мал ĕмĕтлĕ арçын ача çунатланса.

Пĕрремĕшĕнчи Настя Оливанова та аслисенчен юласшăн мар. Урокра питĕ тимлĕскер педагог мĕн ăнлантарнине хăвăрт ăша хывать кăна мар, лайăх ас туса юлать. Вуланине çав самантрах каласа пама пултарать. Уяв кунĕнче вара вăл чăвашла хитре сăвăпа пурне те тĕлĕнтерес шухăшлă.

***Элиза ВАЛАНС.***

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Карапаш пуçламăш шкулĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Паянхи номерте:




• *Паллашăр*: *Канаш районĕнчи Карăклă шкулĕн хастарĕсем* 2 стр.



• *"Сарпике" конкурс çĕнтерӳçи – Кивĕ Улхаш хĕрĕ Диана Ендиярова.* 4 стр.



• Гаврил Кореньков çуралнăранпа 130 çул 8 стр.



• *Лара Михеенко - пĕчĕк партизанка* 10 стр.



• *Ачасене "Тантăш" тусĕ Оксана Ильина "Марине чĕппи" калавпа паллаштарать* 11 стр.

# «Хăвăн вăйна çеç шан»

Çапла шухăшлаççĕ Канаш районĕнчи Карăклă шкулĕнче спорта чунтан парăннă ачасем. Пĕрисем футболла выляма юратаççĕ, теприсем ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен, виççĕмĕшĕсем йĕлтĕрçĕсен секцийĕсене çӳресе пултарулăхĕсене аталантараççĕ. Районти, республикăри тата Раççей шайĕнчи ăмăртусене хутшăнса шкул чысне çӳллĕ шайра тытаççĕ.



## Чĕре сиксе тухасла тапрĕ... Пĕрех çĕнтертĕм!



Çиччĕмĕш класри Алена Тимофеева пурнăçне мĕнле профессипе çыхăнтарассине халех палăртнă.

– Спорт – маншăн хăйне евĕр иленӳ. Унсăр пурăнаймастăп, çавăнпа алла аттестат илсен урăх ниçта та мар, тренера вĕренме кайăп. Ачасене спорта юратма хăнăхтарса çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума пулăшăп, – палăртать хăй шухăшне мал ĕмĕтлĕ хĕр ача.

Алена пилĕк ачаллă çемьерен. Пиччĕшĕпе аппăшне кура вăл та ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине кăмăлпа çыраннă.

– Сергей мана яланах хăйĕнпе пĕрле секцие илетчĕ. Эпĕ, пĕчĕкскер, вĕсем тĕрлĕ хăнăхтару туса ăмăртăва тĕплĕн хатĕрленнине ăмсанса пăхаттăм. Ай, çапла ним тумасăр ларма мĕн тери кичем те тунсăхчĕ. Акă пĕррехинче ман çине те кăмăллăн хĕвел пăхнăн туйăнчĕ. Эпĕ те пиччепе аппа пекех тренировкăсене хавас кăмăлпа çӳреме тытăнтăм. Халĕ тăваттăмĕш класра вĕренекен Миша шăллăм та спортăн çак енĕпех туслашнă. Пĕчĕкскер çав тери йăрă, ӳсĕмсем тума та ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ вăл, – хăпартланать савăнăçлăн.

Кирек епле тупăшура та Алена пĕрремĕш вырăнта пулни пурне те çунатлантарать. Акă кăçалхи вĕренӳ çулĕнче те вăл чылай çитĕнӳ турĕ. Чĕмпĕр хулинче иртнĕ кĕрешӳçĕсен ăмăртăвĕнче те вăл чи пултарулли пулчĕ.

– Ăмăртăва таçтан та килчĕç. Ун чухлĕ çамрăка курсан, паллах, чĕре сиксе тухасла тапрĕ. Ара, пурте çĕнтерӳ картлашки çине хăпарас ĕмĕтпе килнĕ-çке. Çав шутра эпĕ те. Тренерсен шанăçне тӳрре кăларас килчĕ. Хама алла илсе, пăшăрханнине тата хумханнине ирттерсе пур пĕрех çĕнтерӳçĕ пулса тăтăм. Мускаври хĕрӳ тупăшура та чи вăйли пултăм. «Ах, хăвăнпа тупăшакана пĕр шелсĕр çавăрса çапрăн вĕт-ха», – терĕ ăмăрту хыççăн Станислав Александрович Герасимов тренер йăл кулса. «Вăйăра е конкурсра манран пулмасть е эпĕ пултараймастăп тесе чарăнса тăмалла мар, унсăрăн вăйлисен шутне кĕреймĕн», – терĕм хам та хăпартланса.

Аленăн çитĕнĕвĕсемшĕн педагогсемпе вĕренекенсем кăна мар, унăн ашшĕпе амăшĕ те, Тамара Геннадьевнăпа Владимир Михайлович та, чунтан савăнаççĕ.

– Пилĕк ача пирĕн, пурте спортпа туслă. Çитĕнĕвĕ, паллах, хăй тĕллĕн килмест. Педагогсене тав! Вĕсем тăрăшаççĕ-çке пирĕн ачасемшĕн. Пӳртре медальсем çакăнса тăни кăмăла çĕклет. Дипломĕсемпе Кубокĕсем те чуна хăпартлантараççĕ, – теççĕ вĕсем хавхаланулăн.

## Улми йывăççинчен аякка ӳкнине курнă-и эсир?

Вун пĕрмĕш класра вĕренекен Коля Никоноров сăмах ăстисĕр пуçне шӳтçĕ те. Вăл калаçнă чухне пурте ăна итлеме юратаççĕ. «Мĕн те пулин интересли юптар-ха», – теççĕ ăна тепĕр чухне пĕрле вĕренекенсем.

Шупашкарта çуралнă Коля пĕрремĕш хут виççĕре йĕлтĕр çине тăнă. Çакăн хыççăн кашни кунах уçă сывлăшра хул-çурăмне писĕхтернĕ. Спортсмен пулас тĕллевпе хавхаланса пурăннă. Çиччĕ тултарсан пĕррехинче ашшĕпе амăшĕн хĕрӳ калаçăвĕ унăн хăлхине кĕнĕ.

– Аттепе анне ватăлчĕç, вĕсене хуçалăх тытса пыма йывăртарах. Авă выльăх-чĕрлĕхĕ те картиш тулли. Иккĕшĕ ниепле те ĕлкĕреймĕç. Яла куçса кайма тивет. Çитменнине эпĕ кĕçĕнни, кил тĕпкĕчĕ шутланатăп, – ăнлантарнă ашшĕ шухăша путса.

Ял пурнăçĕ питĕ килĕшнĕ Кольăна. Çитменнине асламăшĕпе аслашшĕ çав тери юратнă ăна. Чи тутлине те мăнукне çитерме тăрăшнă. Кил тыткăчи те аслашшĕ мар, асламăшĕ пулнă. Вăрçă ахрăмне пула чылай ар çын тăван тăрăха каялла таврăнайман. Çавна пулах асламăшĕ хăйĕнчен чылай çул çамрăк йĕкĕте качча тухнă.

Амăшне кирек епле ĕçре те пулăшма тăрăшнă Коля. Пĕррехинче унпа ĕне сума тухнă. Вăл епле тăрăшнине куç илми пăхса ларнă. Акă ĕни пĕр вырăнта тăрса ывăннăран-ши е шăна-пăван çыртнăран хăрах урине асăрханса çĕкленĕ.

– Анне, анне, ĕнене тыт-ха хăвăртрах, тӳнсе каять акă! – ялтах сиксе тăрса кăшкăрса янă Коля.

Амăшĕ ун çине пăхса кулнă. Унтан каллех витре ăшă сĕтпе тулма тытăннă.

– Анне, сана пулăшас килет. Атя-ха, хăв вырăна ларт мана, – йăлăннă хайхискер.

Амăшĕ яхăнне те яман. Çакă вара арçын ача кăмăлне йăлтах хуçнă.

Пиллĕкмĕш класра чухне, йĕлтĕрпе туслăскер, тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнса çитĕнӳ тума тытăннă. «Маттур, пултаратăн», – хавхалантарнă тусĕсем. «Улми йывăççинчен хăçан аякка ӳкнине курнă эсир? Е тата атте-анне шанăçне манăн тӳрре кăлармаллах вĕт», – йăл кулса хуравланă вăл вĕсене.

Юратнă çыннисем – тренерсем. Иккĕшĕ те çамрăксене йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене хатĕрлеççĕ. Амăшĕ, Ольга Николаевна, тĕнче класлă спорт мастерĕ. Ашшĕ, Владимир Иванович, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ.

– Атте вун тăхăр çултанпах çак ĕçре тăрăшать. Аннен те пултарулăх опычĕ çав тери пысăк. Çавăнпа эпĕ те вĕсем пекех тренер пулас ĕмĕтлĕ. Кăçал патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене ăнăçлă тытса И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн физкультура факультетне çул тытасшăн. Унта пушшех вăхăт пулмасть манăн, çавăнпа Никифор Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» романне те çине тăрса вуласа тухрăм. Питĕ килĕшрĕ çак произведени, – тет мал ĕмĕтлĕ Коля хавасланса.

## Тăрăшатпăр-ха, талпăнатпăр...



Физикăпа физкультура предмечĕсене килĕштерекен Петр Ефимов та спортпа «чирленĕ».

– Спорт маншăн – чун апачĕ. Çулла стадионта мечĕк хăвалатпăр пулсан, хĕлле йĕлтĕр сырса таçта та çитетпĕр. Тренировкăсене те хаваспа çӳретĕп. Пĕррехинче, паянхи пек ас тăватăп, темле майпа йĕлтĕре хуçса пăрахрăм та çав тери кулянтăм. Ара, хама çĕнтерме пулăшакан йĕлтĕр «пурнăçне» хамах татрăм-çке. Районта, республикăра йĕлтĕрçĕсен тупăшăвĕсенче малти вырăнсене йышăнни мана пурнăçра хавхалантарса пычĕ. Вĕренӳре те ӳсĕмсем тума пулăшрĕ, – тет вун пĕрмĕш класра вĕренекен каччă.

Пушă вăхăтра Петя вулама юратать.

– Анчах интереслисем кăна чуна çывăх. Кичем произведенисене пачах алла тытмастăп, унашкаллисем ман валли мар, – çирĕплетет кăçал алла аттестат илме хатĕрленекен яш.

Малашне канăçсăр кунсем пуçланассине чунпа туять Петя. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене тăрăшса тĕплĕн хатĕрленет вăл.

– Тăрăшатпăр-ха, талпăнатпăр, апла пулин те чунра шиклĕх туйăмĕ пурах. Экзамен вылямалли япала мар-çке. Ăçта вĕренме каясси йăлтах мĕн чухлĕ бал пуçтарнинчен килет. Çапах та хамăн ĕмĕте пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшăп, – çирĕплетсе калать вăл шухăша кайнă май.

Канаш районĕ,
Карăклă.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2327 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1387
Пичете ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.




# Сăкăтсем «Тетте» журналпа туслă




Пирĕн шкул ачисем «Тетте» журнала питех те юратса вулаççĕ. Çак кăларăмăн юлашки номерĕ килсенех кĕçĕннисемшĕн чăн-чăн уяв çитрĕ. Хĕр ачасемпе арçын ачасем тӳрех асамлă тĕнчене кĕрсе ӳкрĕç тейĕн. Пĕри васкасах «Тетте» юмахĕсемпе калавĕсене вулама тытăнчĕ, тепри пӳрне хуçлатсах тем шутлать, виççĕмĕшĕ тĕрлĕ тĕслĕ кăранташпа ӳкерчĕксене сăрлать... Пурте хаваслă.

Пуçламăш классенче вĕренекенсенчен чылайăшĕ çак илемлĕ те пуян содержаниллĕ журнала çырăннă. Паян пĕрремĕш классенчи ачасенчен пиллĕкĕшĕ журнала тăтăшах почта урлă илсе тăрать. Иккĕмĕшĕсемпе виççĕмĕшĕсем вара вун икшер «Тетте» çырăннă. Тăваттăмĕшсем – вун виççĕн! Çитес çур çул валли çырăнса илес текенсен хисепĕ татах та ӳсессе шантараççĕ пирĕн шкул маттурĕсем.

Халĕ вара ачасем «Тетте» журналăн çĕнĕ номерне чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

*Надежда ТИНЮКОВА.*

Патăрьел районĕ,
Сăкăт шкулĕ

**Сăн ӳкерчĕкре:** «Тетте» журнал алра пулсан йăл-йăл кулă çиçет питкуçра!

•ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

## Тема – манăн тус

Пирĕн килте Тема ятлă кушак пур. Ăна ăслă та хăюллă пулнăран питĕ юрататăп. Çамрăкскер питĕ путишле ĕçсем тăвать. Йăпăлтатма, тепĕр чухне хăйне пăхăнтарма килĕш-терет. Унăн хăтланăвĕсене сăнама, унпа выляма кăсăклă. Тема уйрăмах Лена аппана килĕштерет. Вăл канмалли кунсенчен яла таврăнсан унран пĕр шит те уйрăлмасть пуль – ялан пĕрле çӳрет, ун пӳлĕмĕнчен тухма та пĕлмест.

Тема сехет йĕпписем епле куçнине сăнама юратать. Кушака эпĕ питĕ юрататăп, вăл – манăн тус.

*Катя ШАШКОВА.*

## Аппа пек пуласшăн




Манăн виçĕ аппа: Надежда, Кристина, Карина. Эпĕ килте чи кĕçĕнни. Кристина аппа Тĕмер шкулĕнче вун пĕрмĕш класра вĕренет. Вăл спорта юратать. Уйрăмах çăмăл атлетикăна кăмăллать. Ял, район, республика ăмăртăвĕсене пĕрре çеç мар хутшăннă, малти вырăнсене те йышăннă.

Кристина спортра кăна мар, вĕренӳре те çитĕнӳсем тăвать. Кашни предметпа тĕплĕн хатĕрленет. Çитĕнĕвĕсем те çук мар. Вăл историпе, обществознанипе, правăпа, экономикăпа тата ытти те олимпиадăсене хутшăнса çĕнтерӳçе тавраннă. Халь хĕрсех патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене хатĕрленет. Пулас профессие ачасене вĕрентес тата воспитани парассипе çыхăнтарасшăн.

Эпĕ аппана питĕ юрататăп, ун пек пулма ĕмĕтленетĕп, тăрăшатăп.

*Андрей ИВАНОВ.*

Тăвай районĕ,
Тĕмер шкулĕ.

## Кукамайпа мухтанатăп

Карелия Ивановна Павлова – манăн юратнă кукамай. Вăл Вăрнар районĕнчи Аçăмçырмара çуралса çак ялти шкултах вĕреннĕ. Кайран çывăх çыннăмăр Шупашкар районĕнчи Кӳкеçре вăтăр пилĕк çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Халĕ вăл Шупашкарта пурăнать.

Кукамай тăтăшах пирĕн патра хăнара пулать, тутлă кучченеçпе сăйласа савăнтарать. Хамăр та Шупашкара килсен ун патне кĕрсе тухмасăр чăтаймастпăр. Çав тери тарават та маттур çын юратнă кукамай.

*Карина ГРИГОРЬЕВА.*

Çĕмĕрле районĕ,
Юманай шкулĕ.

## Асрах çул çӳрев

Эпир тăтăшах тĕрлĕ музейра пулатпăр. Районти пушар чаçĕн музейне çитсе курни те асран тухас çук.

Вут-кăвар çын юлташĕ кăна мар, унăн тăшманĕ те пулма пултарать. Уйрăмах хамăр асăрхануллă пулман чухне. Çавăнпа та тимлĕхе нихăçан та çухатас марччĕ. Музейра эпир пушар сӳнтермелли хальхи тата авалхи экспонатсемпе паллашрăмăр.

Тепĕр пӳлĕмре вара çын тимсĕрлĕхне пула вут-кăварта кĕлленнĕ япаласен юлашкисене курма май килчĕ. Ытла та хăрушă япала пушар! Унран сыхланмалла, вăл вăйă пулманнине ялан асра тытмалла. Пушар еплерех инкек кӳнине, унпа мĕнле кĕрешмеллине сăнлакан ӳкерчĕксен куравне шкул ачисем хатĕрленĕ. Нумай ĕçпе паллашрăмăр. Выставкăра пирĕн шкул ачисен ӳкерчĕкĕсем пулни питех те савăнтарчĕ.

Пушар чаçĕн музейĕ куракансемшĕн яланах уçă. Кунта пулса курни вутпа татах та асăрхануллăрах пулмаллине пĕлтерчĕ.

*Юлия АЛЕКСЕЕВА.*

Йĕпреç районĕ,
Чăваш Тимеш шкулĕ.

## Çыравçă килĕнче – хăнара

Вуннăмĕш класс вĕренекенĕсем хăйсен ентешĕ Юркка Иванĕ çуралнăранпа 151 çул çитнине паллă тума çыравçă çурт-музейне пухăнчĕç. Çурт никĕсне 117 çул каялла хывнă пулин те пӳрт авалах сыхланса юлнă. Унăн стенисем çыравçă тата этнограф пурнăçĕпе, ĕçĕпе çыхăннă самантсене лайăх ас тăваççĕ.

Шкул ачисем ывăлĕ тăван ашшĕне çак çурта хăпартма пулăшнине, никĕсĕн çурма путвалне «Пулхар» ятлă чăваш хаçачĕ кăларма ятарласа хывнине те пĕлчĕç. Çавăн пекех çыравçăн пĕрремĕш калавĕ «Асамат кĕперĕ» çак çуртра çуралнине те ăша хывреç. Унсăр пуçне кунта тĕрлĕ çулта К.В.Магницкий профессор, Г.Н.Потанин вырăс çыравçи тата ытти паллă çын пулнине те пĕлчĕç. Вĕренекенсене çак тĕлĕнмелле фактсене илтме питех те интереслĕ пулчĕ.

Музей çуллен пуянланса пырать. Писатель пурнăçĕ пирки упранакан тăванĕсен аса илĕвĕсем, унăн ачисен шăписене çутатакан ĕçсем, 1917 çулхи çу уйăхĕнче Хусанта Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсен съездĕнче Юркка Иванĕ Н.В.Никольскийпе тĕл пулни çинчен калакан документсем те хăйсен вырăнĕсене тупрĕç кунта. Çулленех çыравçă çуралнă кунĕ тĕлне ентешĕн калавĕсене тĕпе хурса тунă ӳкерчĕксен конкурсне районти пур шкул ачисем те хавас-пах хутшăнаççĕ. Ялта «Хăята» ятлă уяв йĕркелесси, паллă çынсемпе тĕл пуласси йăлана кĕрсе пырать.

Ялти вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен М.М.Вериялова тата ял библиотекин ертӳçи Е.А.Хлынова Юркка Иванĕн пултарулăхĕпе çыхăннă ĕçе сарас тĕлĕшпе тăрăшаççĕ.

*А.МАЛЫШЕВ.*

Тутарстан Республики,
Пăва районĕ,
Пӳркел.

## Юратнă вĕрентекен

Манăн юратнă пĕрремĕш учительница – Лариса Леонидовна Кузнецова. Пире вăл чи малтанхи кунсенчех вĕрентме тытăнчĕ. Çырма, сас паллисене тĕрĕс калама тата сăмахсене тĕрĕс вулама, задачăсем шутлама вĕрентрĕ.

Шкул пирĕншĕн – иккĕмĕш кил, Лариса Леонидовна вара – иккĕмĕш анне. Пире пурне те хăйĕн тăван ачи пекех юратать, кашнине ăнланма тăрăшать.

Унăн урокĕсенче ларма та интереслĕ. Пĕтĕм чунне парса пĕлӳ тĕнчине илсе кĕрет. Ăслисене хисеплеме, атте-аннене юратма вĕрентет.

*Пĕрремĕш вĕрентекен*
*Кашнийĕн хăйĕн.*
*Пурин те вăл лайăх,*
*Чи лайăххи – пирĕн!*

*Руслан ЧЕРНОВ.*

Комсомольски районĕ,
Нĕркеç шкулĕ.

## Курав уçăлчĕ

Кашни ача мĕнпе те пулин кăсăкланать. Хăшĕ-пĕри сăвă-калав çырма, тепри юрлама-ташлама, виççĕмĕшĕ тĕрĕ тĕрлеме, алса-чăлха çыхма кăмăллать. Эпĕ вара ӳкерме юрататăп. Кашни шăмат кун, уроксем хыççăн «Асамлă сăрă» кружока хапăлласа çӳретĕп. Кунта эпир ӳкерчĕксене илемлĕ ӳкерме, сăрăпа пĕлсе усă курма хăнăхатпăр. Çав вăхăтрах курав йĕркелеме те манмастпăр.

Акă нумай пулмасть черетлĕ курав уçрăмăр. Ку хутĕнче ытларах хамăр тавралăха сăнлакан картинăсем йышлăрах пулчĕç. Ара, Эль тăрăхĕ Чăвашра чи илемлĕ вырăнсенчен пĕри! Çак хитрелĕхе ӳкерчĕксенче палăртса хăварас терĕмĕр. Пирĕн ĕçсем ачасене кăна мар, вĕрентекенсене те питĕ килĕшрĕ. Çитменнине мухтаса, ырласа та хавхалантарчĕç. Малашне те хитре ӳкерчĕксем тума ăнăçу сунчĕç.

*Никита МАКСИМОВ, 6 класс.*

Тăвай районĕ,
Элпуç шкулĕ.

## «Тантăш» – Чĕмпĕр облаçĕнче

# Мĕнле пурăнатăн, аякри тăван?

*Черетлĕ çул çӳревпе Чĕмпĕр чăвашĕсем патĕнче пулма тӳр килнишĕн питех те савăнтăм. Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхаш тата Çĕнĕ Улхаш вăтам шкулĕсенче вĕренекенсемпе тĕл пулу ирттертĕмĕр. Çак илемлĕ ялсенче чăваш çемйи чылай. Ашшĕ-амăшĕ те ачисене тăван чĕлхепе калаçма, йăла-йĕркене пăхăнма вĕрентет. Арçын ачасемпе хĕр ачасем пĕлӳ çуртĕнче те чăн чăвашлах пуплеççĕ. Вĕрентекенсем кулленех шкул ачисене ĕлĕкхи йăла-йĕркепе паллаштараççĕ, атте-анне чĕлхине юратма хăнăхтараççĕ.*

### «Чăваш филологи факультетне вĕренме кĕресшĕн»

– Эпĕ чăваш çемйинче çуралнă. Килте тăван чĕлхепех калаçатпăр. Чăваш праçникĕсене те уявлатпăр, – тет Çĕнĕ Улхаш шкулĕн 9-мĕш класĕнче вĕренекен Лиза Ахвандеева.



Çеçпĕл Мишши каланă сăмахсем аса килчĕç. "Хастарлă, хыт утăмлă пулăр, çĕр-шывăн хастар ачисем..." Лиза та çавнашкал пулнăн туйăнчĕ. Чăваш юнĕ чупать унра, вăл, чăн та, чăвашлăхшăн çунать. "Чĕлхемĕре упраса хăварас килет. Мĕншĕн-ха хăшĕсем тăван чĕлхепе калаçмаççĕ? Вăтанаççĕ-ши?" Çак ыйту канăç памасть ăна. Хăй вара кашни кун тăван чĕлхепе çырнă илемлĕ литература произведенийĕсене вулать, яланах çĕннине пĕлме тăрăшать.

– Ĕлĕкхи йăла-йĕркепе кăсăкланатăп. Унсăр пуçне аслă вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлевич Яковлев çинчен çырнă кĕнекесене вулама кăмăллатăп, – пĕлтерет Чăнлă район пики.

Лиза шкулти "Тăван чĕлхе историйĕ" кружока çӳрет. Унăн ĕçĕ-хĕлне чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ Светлана Федоровна Кудряшова йĕркелесе те ертсе пырать. Ачасене тăванлăх тĕнчипе паллаштарнисĕр пуçне йăла-йĕркепе тĕрлĕ уява еплерех ирттернине ăнлантарса парать. Нумаях пулмасть Светлана Федоровна Лизăна чăваш чĕлхи олимпиадине хутшăнма хатĕрленĕ. Пике район шайĕнче мала тухса облаçре те пĕрремĕш вырăн йышăннă. Учитель вĕрентни те, паллах, пулăшнă ăна. Чылай ыйту паллă çыравçăн пултарулăхĕпе тата халăх йăли-йĕркипе çыхăннă пулнă. Ун йышшисене кружока çӳрекенсем пĕрре мар пăхса тухнă-ха.

Халĕ Лиза экзаменсене хатĕрленет. Чун киленĕçĕ валли те вăхăт уйăрма тăрăшать вăл. Пушă самант тупăнсан хĕр ача Чăвашкассинчи культура çуртневаскать. Унта ташă кружокĕ ĕçлет. Мал ĕмĕтлĕ Лиза кунта та хăйне шыври пулă пекех туять: канать, ăсталăхне туптать, тавра курăмне ӳстерет....

– Шкул пĕтерсен Шупашкара çул тытăп. Чăваш филологи факультетне вĕренме кĕресшĕн эпĕ, – йăл кулать пике.

### Чĕмпĕр облаçĕн «Сарпики»

Диана Ендияровăшăн ку çул чăннипех те савăнăçлисенчен пĕри пулчĕ. Пуш уйăхĕнче вăл Чĕмпĕрте иртнĕ «Сарпике» конкурсра çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ. Çакăншăн хĕпĕртемелле мар-и вара? Диана облаçăн чи маттур та илĕртӳллĕ, анлă тавра курăмлă чăваш пики пулнă саманта халĕ те хавхалансах аса илет.

– Мероприятие тĕплĕн хатĕрлентĕм. Унта пурĕ вун икĕ хĕр ача хутшăнчĕ, пилĕк конкурсра тупăшрăмăр. Малтанах хамăрпа паллаштартăмăр, кайран чăваш йăли-йĕркине еплерех пĕлнине кăтартрăмăр. Тӳресене чăваш ташшипе кашни савăнтарчĕ, наци апат-çимĕçĕпе сăйларĕ. Юлашкинчен вара кĕвентепе шыв витрисем йăтса чăн-чăн чăваш пикисем пек çăмăллăн та хитрен утса çӳрерĕмĕр.

Çапла Диана чи пысăк кăтартусемпе пĕрремĕш вырăна тухма пултарнă. Çĕнĕ Улхаш пики пĕлтернĕ тăрăх, çак ĕçре чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн тӳпи те пысăк. Светлана Федоровна Кудряшова хатĕрленисĕр пуçне хĕрне ашшĕпе амăшĕ те чылай пулăшнă.



– Чăваш апатне мĕнлерех хатĕрлемелли пирки аннерен канаш ыйтрăм. Пĕрле чăкăт пĕçертĕмĕр, кайран конкурсра çак апата мĕнле янтăламаллине каласа патăм, – пĕлтерет Диана.

Тӳресем тăван халăх йăли-йĕркине еплерех пĕлнине те пысăк хак панă. Чăвашкассинчи клуб ĕçченĕ Родион Кириллов тăрăшнипе, çак ял каччисем пулăшнипе конкурсант «Салтак ăсатни» инсценировка та кăтартнă. Диана тĕп рольте вылянă. Арçын ачасем купăс каланă, амăшĕ ывăлне кĕл туса та пил парса çăкăр-тăварпа инçе çула ăсатнă... Калама çук курăмлă та асра юлмалла пулса тухнă сценка.

– Ташлама вара улттăмĕш класра вĕренекен Ксюша йăмăкăм вĕрентрĕ. Вăл Чăвашкасси клубĕнчи ташă кружокне çӳрет. Эпĕ те унта çул такăрлатнă-ха, анчах пушă вăхăт сахаллине пула час-часах çӳрейместĕп, – калаçăва малалла тăсрĕ «Сарпике». – Юлашки конкурса та хатĕрленмесĕр кайман. Тулли витресене кĕвентепе йăтса унталла та кунталла çӳреме хăнăхрăм. Конкурсра вара пушшисене йăтнăччĕ.

Чĕмпĕр облаçĕн «Сарпики» ята тивĕçнĕ Диана çулсеренех чăвашлăхпа çыхăннă мероприятие хутшăнать: тĕрлĕ конкурсра, чăваш чĕлхи олимпиадисенче палăрма та ĕлкĕрнĕ. Вуннăмĕш класра вĕренекенскере тус-юлташĕ те, ял-йыш та мухтать.

### Ăста алăсемпе пулăçсем

Кивĕ Улхашри вăтам шкулти пиллĕкмĕшсем технологи класĕнче пухăннă. Арçын ачасем парта хушшинче лараççĕ, хăйсем темĕн пирки калаçаççĕ. Хĕр ачасен ĕçĕсен куравĕ иккен. Вĕсем ăсталанă ытарма çук «капăрлăха» пăхса тăранаймăн.

– Эсир çитессе пĕлсе ачасене хăйсен ĕçĕсене илсе килме хушрăм, – сăмах хушрĕ пиллĕкмĕш класс ертӳçи Раиса Николаевна Микка. – Сире те вĕсен пултарулăхĕпе паллаштарас килчĕ. Епле илемлĕ-çке!

Темĕн те пур кунта: мăй çакки, тĕрĕсем, кĕлеткесем... Чăн та, пĕри тепринчен капăр. Хĕр пĕрчисем мĕн пур пушă вăхăта чун киленĕçĕ валли уйăраççĕ иккен. Сăмахран, Настя Шаройкина вĕтĕ шăрçапа мăй çакки, алка тата тем те пĕр ăсталать. Дашăпа Наташа Измайловăсем тĕрлеме ăста. Йĕкĕрешсем çекĕлпе те çыхма кăмăллаççĕ. Ирина Пайкина «курава» бисертан хатĕрленĕ йывăç илсе килнĕ. Оля Чингусова та хăйĕн чи чаплă ĕçĕсене кăтартма хавас пулчĕ. Вăл тăмран кĕлеткесем ăсталать. Софья Пучкова вара вак-тĕвекрен тĕрлĕ япала хатĕрлет, унсăр пуçне тĕрĕсем эрешлет.

– Ачасем пур енлĕ аталанма тăрăшаççĕ. Шкулта иртекен мероприятисене те хастар хутшăнаççĕ. Пирĕн класра çамрăк сăвăçсем те пур. Оксана Смирновăнах илер акă. Юлташĕсене çуралнă кун ячĕпе саламласа открыткăна ăшă сăмахсем çырса шăрçалать те парнелет. Кун пек парнене илме те кăмăллă, – калаçăва тăсрĕ пиллĕкмĕшсен «иккĕмĕш амăшĕ».

Раиса Николаевна Микка тĕпренчĕкĕсем – патриотсен «Катюша» клуб членĕсем те. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнма вĕрентеççĕ кунта. Унсăр пуçне пĕччен пурăнакан ватăсене пулăшма та. Вутă çурмалла-и, тирĕк-чашăк çумалла-и... «Катюша» клуб членĕсем яланах пулăшма васкаççĕ. Ватăсем куншăн савăнаççĕ. Тин çеç пиллĕкмĕш класс Афган вăрçине хутшăннă салтаксемпе тĕл пулу та йĕркеленĕ.

Арçын ачасем пушă вăхăта еплерех ирттереççĕ-ши вара? Пурте пулă тытма кăмăллаççĕ иккен. Çулла çитессе чăтăмсăррăн кĕтеççĕ вĕсем. Часрах кӳлĕ хĕрринче ларса пысă-ă-ăк пулă тытма ĕмĕтленеççĕ маттурсем.

– Эпĕ спортпа туслă. Кашни кунах кĕрешӳ секцине çӳретĕп. Нумай пулмасть область ăмăртăвĕ иртрĕ, мана Хисеп хучĕ парса чысларĕç. Çакăншăн питĕ савăнтăм, – пĕлтерет Денис Чатта.

Кивĕ Улхаш ачисем маттур пулни иккĕлентермест. Тăрăшса вĕренеççĕ, сывă пурнăç йĕркине пăхăнса хул-çурăма çирĕплетеççĕ...

### Пилĕк çул хорта юрлать

– Сăвă çырасси пĕр вăхăт чун киленĕçĕ пулса тăнăччĕ. Халь пушă вăхăт çитсе пыманран çак ĕçе пăрахăçларăм. Часах экзамен тытмалла, çавăнпах халĕ çине тăрса, тăрăшса вĕренетĕп. Урокра та, килте те тĕрлĕ хăнăхтару пурнăçлатăп, – тет вун пĕрмĕш класра ăс пухакан Наталья Суркова.



Кивĕ Улхаш пики сăвă йĕркисене чун-чĕрере çуралсанах ятарлă тетраде çырса хума тăрăшать. «Паллах, веçех кăмăл-туйăмран килет», – тет вăл. Çут çанталăка сăнама кăмăлланăран чылай сăвă унпа çыхăннă Наташăн. Юрату çинчен шăрçаланисем те çук мар. Ун йышши сăвăсене çырма ăна илемлĕ литература произведенийĕсем çунатлантараççĕ иккен.

– Пĕр вулама пуçласан кĕнекене алăран ярас та килмест. Манăн юратнă хайлавсем те пур. «Укахви хурăнĕ» калаври тĕп сăнара питĕ шеллетĕп. Вăл чунпа ырă, чăтăмлă пулни тĕлĕнтерчĕ. «Чĕкеçĕм, чĕкеç» кĕнекене вуласа тухсан куçăмран куççуль юхрĕ, – чунне уçрĕ пике.



Наташа пултаруллă пулнине тепĕр тĕслĕхпе те çирĕплетме пулать. Пике музыка шкулĕн фортепьяно класĕнче вĕреннĕ. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне вăл клубра йĕркеленĕ хора çӳреме пуçланă.

– Юратсах çӳретĕп унта. Ташлатпăр, чăваш юррисене шăрантаратпăр. Чăвашлăхшăн тăрăшатпăр, – йăл кулать пултаруллă хĕр.

Чĕмпĕр облаçĕ,
Чăнлă районĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Ирина КОШКИНА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
15 №, 2014, ака, 17



# Ăна шанни тата ĕненни кирлĕ...

Пурнăçран темĕн те кĕтсе илĕн. Çапах хурапа шурă черетленсе пынине манмалла мар. Паян ăнăçсан та ыран такăнма пултарăн. Хăшĕ-пĕри пĕрре такăнсанах алă сулать: «Тĕллеве пурнăçласси пулмарĕ», – тет. Тепри пур пĕрех малалла талпăнать, çак хура йĕре каçсан каллех шурри  патне çитсе тухасса ĕненет. Тепĕр чухне вара çĕкленсе малалла кайма пире кам та пулин ăнланса, эпир темĕн те тума пултарасса шанса хавхалантаракан кирлĕ. Хамăр вăя ĕненме пăрахнă вăхăтра çунатланма пулăшакан юнашар пулни мĕн тери паха.
Çак тĕнчипе паллă футболистăн та пĕтĕмпех çăмăллăн килмен. Вăл вылянине куç илмесĕр сăнакансем унăн кашни хусканăвне асăрхаса тăнă май чылай хурлăхлă самант асăрханă: «Жервиньо мечĕке ăçта лекет, çавăнталла тапать», «Жервиньо гол кĕртеймерĕ», «Жервиньо култарать кăна»... Çапах паян нумайăшĕ унăн профессионал ăсталăхĕнчен тĕлĕнет.



| | |
|---|---|
| тулли ячĕ: | Жерве Куасси |
| ячĕ латинла: | Gervais Yao Kouassi |
| хушма ячĕ: | Жервиньо |
| хăçан тата ăçта çуралнă: | 1987 çулхи çу 27, Аньяма, Кот-д'Ивуар |
| гражданство: | Кот-д'Ивуар |
| клуб: | Рома |
| амплуа: | çурма хӳтĕлевçĕ |
| вăйăри номерĕ: | 27 |
| пĕрлештернĕ команда: | Кот-д'Ивуар пĕрлештернĕ команди |
| çӳллĕшĕ: | 179 |
| йывăрăшĕ: | 68 |

Жервиньо çăлтăрĕ 2009 çулта çуталса кайнă. Ун чухне футболист Францин «Лилль» командинче выляннă. 2011 çулта Лондона куçсан ăна «Арсеналăн» пĕрремĕш матчĕнченех кăларса яраççĕ. Сăлтавĕ – Джоуи Бартонпа тытăçни. 2013 çулхи çурла уйăхĕнчен пуçласа Жервиньо – Итали «Ромин» выляканĕ.

«Арсеналта» япăхрах кăтартусемпе палăрнăскере Гарсия ниме пăхмасăр хăйĕн клубне илет. «Ăна тренер тата пĕрле выляканcем шанни кирлĕ», – тет вăл футболист пирки. Унччenхи командăра Ивуар çĕрĕн ывăлне шăпах çак ĕненӳ çитмен. Малтанхи тренировкăсенче çаврăнăçусăр курăннă пулин те Рим футболисчĕсен капитанĕ Франческо Тотти унра кирлĕ ен пуррине асăрханă. «Унччен эпĕ ăна «Арсеналта» икĕ е виçĕ хутчен кăна курнăччĕ. Çывăхарах пăхсан вăл питĕ хăватлă иккен, – тенĕ «Рома» ветеранĕ. – Ытларах гол кĕртсенех вăл Криштиан Роналд шайне çитĕччĕ». Çак футболист командăна хутшăнни тӳрех пысăк ӳсĕм кăтартман тесен те юрать. Çапах вăл пурри сисĕнетех. Жервиньо выляннă чухне «Рома», вăтамран илсен, вăйă вăхăтĕнче 2,41 гол кĕртет. Вăл пулмасан вара – пĕрре çеç.




Çак футболиста, чи малтанах, ирĕк кирлĕ. Пĕрле выляканcене çурăмран мечĕк ывăтса пама май килтĕр. Вара вăл тинех хăйне кăтартма пултарать. Жервиньо дриблинг (мечĕке çĕр çумĕпе питĕ çывăх сиктерсе кайни)  мелĕпе ăнăçлă усă курать, хирĕç выляканcенчен çăмăллăн хăтăлма пултарать.

«Арсеналта» выляннă вăхăтра Жервиньоран тăрăхласа кулнă, «Ромăра» вара ăна питĕ хаклаççĕ, хисеплеççĕ. Малашне тата пысăкрах çитĕнӳпе те савăнтарĕ-ха вăл.

АПШ Президенчĕ Барак Обама, мечĕк тапса кĕртессипе «Арсенал» рекордсменĕ Тьерри Анри тата Jay Z рэпер – Жервиньо чи хисеплекен паллă çынсем. Вĕсемпе пĕрле  кăнтăр апачĕ çисе курма ĕмĕтленет футболист.

Кот-д'Ивуарта Жервиньона питĕ юратаççĕ. Ăна юрă та халаллананă, унта пурнăçа еплерех улăштарма пулни çинчен каланă. Вăл, паллах, футболист чĕрине пырса тивнĕ.

Жервиньо яланах хăйĕн çемйи пирки шухăшлать, ачисемпе мультфильм пăхать. «Пушар тухсан килтен чи малтан мĕн илсе тухнă пулăттăн?» – тесе ыйтсан вăл çапла хуравланă: «Мана пурлăх кăсăклантармасть. Килте арăмпа ачасем пулмасан урăх нимĕн те кирлĕ мар».

Жервиньо çӳçне те хăй евĕрлĕ пуçтарать. Çак йăлана Францирех пуçласа янă вăл. Африкан çивĕчĕсем тата кăштах хырнă çамка. Нумай çул хушши ĕнтĕ футболист çак стиле пăрахăçламасть. Юлашки вăхăтра вара пуçне хăю çыхса выляма та пуçларĕ.




«Пурнăçа футболпа çыхăнтармасан кам пулăттăмччĕ-ши? Калама хĕн. Эпĕ Кот-д'Ивуарта ӳсрĕм, ку çăмăл мар. «Аслă пĕлӳ илĕп те банкра ĕçлеме тытăнăп», – теейĕмĕн, çапла тума пурин те май çук. Мана футбол çăлчĕ тесен те йăнăш пулмĕ, çавăнпа вăл маншăн ĕçрен те пысăкрах».

***Лариса ПЕТРОВА хатĕрленĕ.***



# Кирек ăçта та пултараççĕ

**Вуннăмĕш класс каччисем волейбол секцине çӳреме кăмăллаççĕ. Вĕсен команди тĕрлĕ ăмăртура çĕнтерсе шкул чысне пĕрре çеç мар çĕкленĕ. «Пĕрлĕхре – вăй» тенине яланах асра тытаççĕ хастарскерсем. Ытти ушкăна хирĕç вĕсем пĕр-пĕринпе канашласа, пĕр чĕлхе тупса выляççĕ. Çăмăллăнах çĕнтереççĕ вара. Асăннă спорт тĕсĕсĕр пуçне тата мĕн кăсăклантарать-ши йĕкĕтсене?**




Акă, сăмахран, Алешăпа Саша Кашаевсем музыка инструменчĕсем калама юратаççĕ. Пĕри – ăста купăсçă, тепри – гитарист. Пĕр тăвансем шкулти музыка кружокне çӳресе ăсталăха ӳстереççĕ. Тĕрлĕ мероприятие хутшăнаççĕ. Алеша районта çуллен иртекен купăста фестивалĕнчи купăсçăсен конкурсĕнче тупăшать. Грамотăсем те йышлă унăн. Арçын ачасен кукашшĕ таврари паллă купăсçă пулнă-çке, çавăнпа та Алеша çак инструментпа çăмăллăнах калама вĕренниnчен тĕлĕнмелли çук.

Сашăна вара гитарăпа выляма иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ вĕрентнĕ. Унăн чи юратнă юрри – «Милые, зеленые глаза». Вăл кĕвве каччă кунĕпе калама хатĕр.

Волейболсăр пуçне футбол тата хоккей вăййисене килĕштерет Саша. Йĕлтĕрпе чупма та пултарать. Ăмăртусене хаваспах хутшăнать.

Унăн чун киленĕçĕ вара – çĕмĕрĕлнĕ машина-трактора юсасси. Чăн-чăн маçтăр пекех вăл, техникăна наччасрах чĕрĕлĕх кĕртет. Малтан ашшĕпе пĕрле çак ĕçпе тăрмашнă, халĕ хăй тĕллĕнех тимĕр "урхамахсене" сиплеме пултарать. Юлташĕсене те сĕнӳ-канашпа пулăшма яланах хатĕр маттурскер. Унăн тантăшĕ Леня Шибаев та техникăпа аппаланма юратать. Машина-трактор çĕмĕрĕлнин сăлтавне тӳрех тупса çанă тавăрсах юсав ĕçне пуçăнать. Юратнă ĕçпе тăрмашнă чухне вăхăт та хăвăрт иртет арçын ачасемшĕн.

Техника "тухтăрĕсемпе" пĕр класрах вĕренекен Саша Никитин вара мĕн ачаранах биатлонпа интересленет. Çавăнпах-тăр йĕлтĕрпе чупассинче питĕ хастар вăл. Чылай медаль çĕнсе илнĕ. Ун пек пулсан та Саша хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе мухтанма юратмасть. Тĕнчипе паллă биатлонист пулма ĕмĕтленекенскер çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать, хăйĕн тĕллевне çывăхлатсах пырать. Тен, эпир ăна темиçе çултан Олимп вăййисенче те курăпăр-и? Вăхăт иртсен пĕлĕпĕр.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Куславкка районĕ,
Кушнар.
**Ирина КОШКИНА сăн ӳкерчĕкĕ**.

# Космонавтика эрнелĕхĕ





**Шупашкарти 10-мĕш шкул икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ, СССР летчик-космонавчĕн, авиаци генерал-майорĕн Андриян Григорьевич Николаевăн ятне çӳлте тытать. Çавăнпа та Космонавтикăпа авиаци кунĕ çак шкулшăн чăн-чăн уяв. Кунта Космонавтика эрнелĕхĕ мĕнле иртнине каласа парас терĕç «Виртуаллă класс» проекта хутшăнакан 5 «б» вĕренекенĕсем.**
**Айсан ТЕРМЕН.**

*Илемлĕ шкул нумай Раççейре,*
*Чаплă гимнази, элита лицей...*
*Пирĕн шкула пырсассăн пĕрре*
*Юлать вăл чуна ĕмĕр-ĕмĕре!*

Çакăн пек сăвăпа уçăлать пирĕн шкул сайчĕ. Космонавтика эрнелĕхĕпе кĕскен паллаштариччен шкул директорĕ Светлана Владимировна Кумалькова паллă кунпа саламланине те илсе кăтартар:

«Туссем, Космонавтика тата авиаци кунĕпе пурсăра та саламлатăп! Пĕрремĕш космонавт уçлăха хăпарнă кун мĕнлерех хавхалану-савăнăçпа тулнă. Мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши этемлĕх çăлтăрсем патне çĕкленме! Çав кунтан вара çак асамлă ĕмĕт пурнăç чăнлăхĕ пулса тăнă. Космоса малтанхи утăмсем тунисен ячĕсене истори ĕмĕрлĕхех упраса хăварать. Несĕлсен йăли-йĕркине упрар, çамрăксен çăлтăрĕ ялан çунса-ялкăшса тăтăр тесе тăрăшар».



Эпир Светлана Владимировна сăмахĕсемпе килĕшетпĕр, сире ырлăх-сывлăх сунатпăр. Пирĕн шкул вĕренекенĕсем чунпа пурте – космонавтсем! Çакна та асăрхаттарар: Космонавтика эрнелĕхĕнче пирĕн шкулта ют планетăсем çинчен килнĕ такамсене çеç мар, Кариб тинĕсĕнчен пуçтарăнса çитнĕ пиратсене те курма пулатчĕ!

***5 «б» класс ачисем.***
Шупашкар, 10-мĕш шкул.

## Флэшмоб

Ака уйăхĕн 7-12-мĕшсенче пирĕн юратнă шкулта Космонавтика эрнелĕхĕ иртрĕ. Тунти кун – эрнелĕхĕн пĕрремĕш кунĕнче – космос темипе илемлетнĕ класс алăкĕсене курса савăнчĕç ачасем. 5-7 классем хушшинче «Йĕрлевçĕ: шкул историйĕн страницисемпе» вăйă пуçланчĕ. Вĕрентекенсем пире кашни кун çĕнĕ ыйтусем, ĕçсем сĕнчĕç. Хуравсене пĕтĕмлетсе çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç. Маншăн чи асра юлнă мероприяти – «Пурнăçшăн савăнса ташла» ятлă флэшмоб пулчĕ. Ака уйăхĕн 7-мĕшĕ – Сывлăх кунĕ, çакна та асра тытса-чысласа флэшмоб ирттертĕмĕр эпир. 6-5 классенче вĕренекенсем хутшăнчĕç унта.

***Артем ЕГОРОВ.***

## Стартсем

Пирĕн шкулта Космонавтика эрнелĕхне ирттересси йăлана кĕнĕ. Уçлăха халалланă эрнере тĕрлĕ мероприяти йĕркелетпĕр. Ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче 5-мĕш классем хушшинче «Космос старчĕсем» эстафета иртрĕ. Эстафетăра ăмăртусем черетленсех пычĕç. Хавхалантару ушкăнĕ те тупăшакансене хĕтĕртсех тăчĕ. Пирĕн класс ачисем питĕ тăрăшрĕç: 5-мĕш «б» – эстафета çĕнтерӳçи!

Савăннăран кăмăлсем тинĕс пек тулса тăкăнчĕç, çĕнтерӳшĕн мĕн таран хĕпĕртерĕмĕр эпир.

***Дарья АДЮКОВА,***
***Лиза ЯКОВЛЕВА.***

## Космос станцийĕсем

Ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче шкул орбитинче космос станцийĕсем уçăлчĕç, мĕнле хаваслăн ĕçлерĕç вĕсем! Эпир коридорсемпе ыткăнса çӳрерĕмĕр. Кăсăклă ĕçсем пурнăçларăмăр. Пĕрремĕш задани: «Пирĕн пуласлăх» картина ӳкермелле. Ӳкерчĕкшĕн пирĕн класс 9,5 балл илчĕ. Иккĕмĕш ĕç: ӳкерчĕксенче камсене сăнланине пĕлмелле, вĕсем çинчен каласа памалла. 13 балл пуçтартăмăр. Виççĕмĕш ĕç: кĕвĕ-çемĕ аса илмелле. Пирĕн – 10 балл. Тăваттăмĕш задани: сĕтел çине михĕсем ыватмалла. Çăмăл мар, анчах çамрăк космонавтсем нимĕнле ĕçрен те хăрамаççĕ!

Пиллĕкмĕш задани «Эпир – талантсем» ятлă пулчĕ. Ачасем сăвăсем каласа пачĕç, ташласа савăнтарчĕç, пултарулăхне кăтартрĕç. Космос станцийĕсен ăмăртăвĕсенче пирĕн класс 3-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Эпир çакăншăн кулянмастпăр, малашне хамăра лайăхрах кăтартăпăр.

***Оливия ВАСИЛЬЕВА.***

## Алăк эрешĕ – шкул ӳнерĕ

Космонавтика эрнинче хамăрăн 208-мĕш кабинет алăкне илемлетрĕмĕр. Алăксене шкул уявĕсенче яланах эрешлетпĕр-ха эпир. Кам хитререх те курăмлăрах илемлетет – çакă кăсăклă. Пирĕн ӳнер ĕçне кайран ятарлă ушкăн хаклать, маттуррисене линейкăра асăнаççĕ, вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче грамота парса чысласçĕ.

Алăк эрешлесси пирĕншĕн кăсăклă çеç мар, питĕ яваплă та. Космонавтика эрнинче вара шкул ӳнерĕн пĕлтерĕшĕ тата анлăланать: кашни класс Андриян Григорьевич Николаевпа мĕнле мухтаннине эреш чĕлхипе кăтартса парать.

***Юля ГРИГОРЬЕВА.***

## Пьедестал çинче – 5 «б»!

Космонавтика эрнелĕхĕн картинче акан 10-мĕшĕнче шкулта спорт вăййисем иртрĕç. Ăмăртусенче 5-7 класс ачисем тупăшрĕç. Пирĕн класс пурне те кая хăварса 1-мĕш вырăна тивĕçрĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене вара 5-мĕш «з» тата 5-мĕш «п» классем йышăнчĕç.



***Оля МОЛОСТОВА.***

## Çамрăк талантсем

Илемлĕ вулакансен курултайĕ акан 11-мĕшĕнче пуçтарăнчĕ. Сăмах хаклавçисем сăвăсем вуларĕç, тĕрлĕ сценка кăтартрĕç, юрăсем шăрантарчĕç. Савăнтарчĕç те, тĕлĕнтерчĕç те вĕсем. Чылай юрри-сăввине ачасем хăйсемех çырнă! Жюри членĕсен талантсене мĕнле хакламалли пирки чылай шухăшлама тиврĕ.

***Лейла ИВАНОВА.***



## Радио-урок

Акан 12-мĕшĕнче кĕçĕн классем Андриян Николаева халалланă радио-урок ирттерчĕç. 1-4 класра вĕренекенсем юратнă ентешĕ çинчен нумай çĕннине пĕлчĕç. Урок вĕçленсен ачасем Николаев урамĕнчи космонавт бюсчĕ патне чĕрĕ чечексем кайса хучĕç.

***Настя ПОХОДИЕВА.***

## Тепĕр çулчен!

Космонавтика тата авиаци кунĕнче – акан 12-мĕшĕнче – шкул кĕрлесе кăна тăчĕ. Ал ĕç куравĕнчи экспонатсем – ракетăсем, космос техники мĕнле тулькккăш вĕçсе хăпарса каймарĕç пĕлĕте! Ачасем вĕрентекенсемпе пĕрле А.Г.Николаев бюсчĕ, Ю.А.Гагарин палăкĕ патне чечек çыххисем кайса хучĕç. Космос паттăрĕсене чысласа сăвăсем вуларĕç.

5-9 классенче вĕренекенсем космос станцийĕсен вăййисене хутшăнчĕç. Станцисем ĕçне вĕçлесен, ирттернĕ ĕçсен пĕтĕмлетĕвне тусан Космонавтика эрнелĕхĕ хупăнчĕ. Тепĕр çулчен, аслă уçлăх!

***Света КРУГЛОВА.***

# Чăваш Ен çамрăк космонавчĕсем республикăри X слета хутшăнчĕç

2014 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче Космонавтика кунĕ ячĕпе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче «Пире космос чĕнет!» ятпа çамрăк космонавтсен X слечĕ иртрĕ. Кăçал ăна Чăваш Ен мухтавлă ывăлĕ А.Г. Николаев çуралнăранпа 85 çул çитнине халалларăмăр. Унта çĕре яхăн вĕренекен, çамрăк космонавтсен чи лайăх çирĕм икĕ отрячĕ тата республикăри вун сакăр муниципалитет хутшăнчĕ.

Слета космонавт летчикăн аса илӳ комплексĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уçрĕ. Хисеплĕ хăнасем хушшинче «Байконур» космодром ветеранĕ Евгений Южалин, «Плесецк» космодром ветеранĕ Евгений Шашкин, Хусанти наци тĕпчев техника университечĕн аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрлекен управлени пуçлăхĕ Динар Габидуллин, ЧР Вĕренӳ тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Роза Ракова, «КАИСТ» управляющи кампанийĕн директорĕ Владимир Федоров пулчĕç.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски шкулĕн çамрăк космонавчĕсемпе кадечĕсем акципе килĕшӳллĕн флешмоб тата плац-концерт ирттерчĕç.






Пуçтарăннисемшĕн кĕтмен парне евĕрех туйăнчĕ вăл. А.Г. Николаев вил тăпри умне чечексем хунă хыççăн çамрăк космонавтсем пĕрремĕш хут строй хатĕрленĕвĕн конкурсне хутшăнчĕç.

Шуршăлти информаципе культура центрĕнче слет малалла тăсăлчĕ. Унта ачасем сăн ӳкерчĕксемпе пултарулăх ĕçĕсен «Çăлтăрсем патне çул хыватпăр» ятпа йĕркеленĕ куравпа паллашрĕç, тантăшĕсен ракета тата тĕнче уçлăхне вĕçекен карап макечĕсене курса тĕлĕнчĕç.

2013-2014 вĕренӳ çулĕнче республикăри тата Пĕтĕм Раççейри конкурссенче, конференцисенче, куравсенче, олимпиадăсенче, ăмăртусенче хастарлăхпа палăрнă маттурсене савăнăçлă лару-тăрура чысларĕç. Çамрăк космонавтсен чи лайăх тăватă отрядне ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин Дипломĕпе, куçса çӳрекен кубокĕпе савăнтарчĕç. Вĕсем иртнĕ çул та çĕнтернĕччĕ: Муркаш районĕнчи С.М. Михайлов-Янтуш ячĕллĕ Юнкă шкулĕн «Юнга» («Спортпа техника юхăмĕ» номинацире), Çĕмĕрлери 8-мĕш гимназин «Земляне» («Наукăпа техника пултарулăхĕ»), Çĕрпӳри 2-мĕш шкулăн «Млечный путь» («Шыравпа тĕпчев ĕçĕ» номинацире), Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл шкулĕн «Восток» («Халăх кăмăлне каякансем» номинацире) отрядсем. Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ районĕсенчен тата Çĕмĕрлерен çичĕ çамрăк космонавт аслă категорие палăртакан «Çăлтăра» тивĕçрĕ. Строй хатĕрленĕвĕн смотр-конкурсĕн пĕтĕмлетĕвĕпе вара Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл, Патăрьел районĕнчи Туçа, Çĕрпӳри 2-мĕш шкулĕсем, Çĕмĕрлери 8-мĕш гимнази çĕнтерчĕç.

Маттур та хастар ачасене Космонавтика кунĕ ячĕпе тепĕр хут саламлатпăр, чи ыррине кăна сунатпăр!

***«ЮНИТЭКС» центр.***

# Фермер хĕрĕ



**Ирех тăрать, тумланать,**
**Нарспи ĕçе тытăнать...**

Темшĕн тӳрех Константин Иванов çырнă йĕркесем аса килчĕç мана çак ĕçчен хĕр пĕрчипе паллашсан. Ирина Филиппова Етĕрне районĕнчи Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнать. Фермер хĕрĕ. Хĕр ача тесе калама чĕлхем çаврăнмасть. Пĕрре те ачалла мар-çке. Хальхи вăхăтра шкул ачисем хушшинче ир-ирех тăрса ĕне сăвакан сайра пуль. Ирина вара вĕренме кайиччен ĕне те суса хăварать. Ашшĕ-амăшне пур енĕпе те çăмăллăх кӳрет: апат пĕçерет, тислĕк хырать, пыл хурчĕсене пăхать, трактор çӳретет... Хурçă учĕпе ял çыннисене утă тавăрма, кăшман турттарма пулăшать. Етĕрнери 1-мĕш гимназире пиллĕкмĕш класра вĕренекенскер пĕтĕм çĕрте хастар. Мĕн пур конкурса хутшăнать. Сăвă шăрçалать. Çак кунсенче сăвă вулассипе шкулта пĕрремĕш вырăн йышăннă. Дневникĕнче те «пиллĕксем» кăна. Тăватă çултах вулама, юрлама-ташлама вĕреннĕ хĕр ачан юратнă каларăшĕ те – «Ĕçленипе çын вилмест».

Юлашки кунсенче ĕнесем тăтăшах пăрусемпе савăнтарчĕç. Иринăн ятарлă тетрадь те пур. Унта вăл хăш кун мĕнле чун çут тĕнчене килнине çырса пырать. Нумаях пулмасть çеç Зорька Чернушка вăкăр пăруланă. Волга вара Вика тына парнеленĕ. Ĕнер ав тĕнчене Ракета килнĕ. Çитес вăхăтра Эльба, Дочка йыш хушмалла. Ячĕсене те хăех парать хĕр ача.

Ирина ӳссен адвокат пулма ĕмĕтленет. Сăлтавсăр айăпланă çынсене тӳрре кăларма пулăшасшăн.

Пушă вăхăтра сăвă çыраканскер самантрах пуçа кĕнĕ çĕнĕ йĕркесене вуласа пачĕ:

Пирĕн пĕчĕк Марине
*Ыраттарнă урине.*
*Макăрать те кулянать,*
*Амăшĕ патне чупать.*
*Амăшĕ ун суранне*
*Эмелпе çыхса ярать.*
*Çакăн хыççăн Марине*
*Сиккелет те чупкалать.*

Малашне те чун хавалĕ çирĕп пултăрччĕ çак маттурккан.

***Елена НИКОЛАЕВА.***

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Тĕпчев ĕçĕ кăсăклă та!

Ăслă ачана пĕрре курсах туйса илетĕн çав. Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăм шкулне тăваттăмĕш класа çӳрекен Максим Данилов çинчен тӳрех çапла шухăшларăм. Чăнах та, лайăх вĕренекенсенчен пĕри вăл. Тен, унран хăçан та пулин паллă ăсчах та пулĕ? Ахальтен каламастăп çакна. Максим тĕпчев ĕçĕсемпе питĕ кăсăкланать. Çавăнпах ӳсен-тăран та, шыв-шур та, сывлăш тытăмĕ те ахаль япала çеç мар уншăн. Иккĕмĕш класрах «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурса хутшăнса кислород пирки нумай калаçнă вăл, тĕрлĕрен опыт туса кăтартнă. Лавкара сутакан сăрăсене килте мĕнле тума май пуррине тĕпчесе пĕлнĕ, ыттисене ăнлантарнă.

Хастарскер ӳкерчĕксен конкурсĕнче те час-часах палăрать. Амăшĕ Зоя Владимировна Данилова – кĕçĕн классен вĕрентекенĕ. Вăл ӳкерме ăста, çак пултарулăх, ахăртнех, ывăлне те куçнă. Кăçал арçын ача амăшĕпе пĕрле «Чăваш апат-çимĕçĕ» конкурса хутшăнса çĕнтернĕ.

Максим çу кунĕсене питĕ юрататать, çав хаваслă вăхăтсем çитессе чунтан кĕтет. Ара, ун чухне вăл юлташĕсемпе шывра чăмпăлтатĕçке! Çуллахи çут çанталăк та илемлĕрех. Тăван тавралăх умĕнче пысăк яваплăх туяканскер вăрманта пушă кĕленчесем е ытти ăпăр-тапăр выртнине курсан лăпкăн иртеймест, вĕсене пуçтарса çӳп-çап миххине тултарать. Ашшĕ-амăшĕ ăна яланах ырă чунлă та типтерлĕ пулма вĕрентет-çке. Çавăнпа пархатарлă ывăлĕ вĕсене савăнмалли сăлтавсем кăна тупса парать. «Çывăх та юратнă çыннăмсене пулăшмалла, вĕсем валли парне хатĕрлеме ӳркенмелле мар. Тата лайăх вĕренмелле!» – тет вăл. Максимран юлташĕсем те ырă тĕслĕх илеççĕ.

***Лариса ПЕТРОВА.***



ГАВРИЛ КОРЕНЬКОВ ÇУРАЛНĂРАНПА 130 ÇУЛ

# Халăх шăпишĕн кулянса

**Гаврил Алексеевич Кореньков (Каринкке Кавĕрли) 1884 çулхи ака уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче Хусан кĕпĕрнин Çĕрпӳ уесĕнчи (халĕ Чăваш Республикин Куславкка районĕ) Кивĕ Тĕрлемесре вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă, 1892-1895 çулсенче ялти шкулта, унтан 1903 çулччен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Кайран вăл ĕмĕр тăршшĕпех тăван ялĕнче вĕрентекен пулса ĕçленĕ.**

**Поэт литература ĕçне 1901 çулта пуçăннă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вăл «Çамрăк сăвăçсен ушкăнне» йĕркеленĕ, пĕр вăхăт ал çыру журналĕ кăларнă, унта вырăсла та, чăвашла та çырнă.**

**1901-1917 çулсенче сăвăç çĕр алла яхăн сăвă-юрă, юмах-поэма хайланă, чăваш халăх юмахĕсене чылай сăвăланă. Унăн лирикинче граждранлăх, философи, пейзаж, юрату темисем пысăк вырăн йышăнаççĕ.**

**Г.Кореньков И.А. Крыловăн юптарăвĕсене, А.С. Пушкинăн «Пулăçăпа пулă юмаххине» чăвашла куçарнă. Унăн хăш-пĕр сăввипе куçарăвĕ 1906-1907 çулсенче «Хыпар» хаçатра тухнă.**

**Поэт Аслă Октябрь революцийĕ хыççăн та сăвăсем çырнă, вырăсларан куçарнă. 1920-1940 çулсенче вăл шкул кĕнекисем хатĕрлес ĕçе те хутшăннă. Çут ĕçĕнче нумай вăхăт пархатарлă ĕçленĕшĕн Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ ята тивĕçнĕ. Ăна Ленин орденĕпе чысланă. Поэт 1949 çулхи пуш уйăхĕн вун улттăмĕшĕнче ĕмĕрлĕхех пирĕнтен уйрăлса кайнă.**



Гаврил КОРЕНЬКОВ

20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш поэзийĕ нумай енлĕ те хăвăрт аталанать. Çавăнпа ăна тĕпчевçĕсем пирĕн поэзин ылтăн ĕмĕрĕ теме пуçларĕç. Çав тапхăрта сăвă çырассипе уйрăмах Тарас Кириллов, Константин Иванов, Николай Шупуçсынни, Тайăр Тимкки, Николай Шелепи нумай вăй хунă. Юлашки вăхăтра вĕсен ретне Гурий Комиссаровпа Гаврил Кореньков та хутшăннă. Вĕсем çырнисем вулакан патне йышлăн çитрĕç. Акă Г.Кореньковăн «Суйласа илнисем» (2010) кĕнекинче çĕр ытла сăвăпа вунă юмах-поэма пичетленнĕ.

Раççейре революци юхăмĕ вăйланнă май чăваш çыравçисем те тăван халăх шăпи çинчен тарăн шухăша каяççĕ. Çав шутра Г.Кореньков та. Халăхăн йывăр пурнăçĕ çинчен пăшăрханни уйрăмах унăн «Чăваш» ятлă сăввинче палăрать. Вăл пирĕн халăхăн аслă шкулсем, пăрахутсем çуккишĕн пăшăрханать.

*«Мĕншĕн эсĕ кăшт пĕртак*
*Шухăшласа пăхмастăн?*
*Мĕншĕн эсĕ тăм ашак,*
*Мĕншĕн куçа уçмастăн?*
*Кала халĕ, мĕн пур сан?*
*Аслă школсем пур-и сан?*
*Театрсем пур-и сан?*
*Праход-лодка пур-и сан?»*

Çак сăвва çырнăранпа 107 çул иртнĕ. Юрать-ха, чăваш «куçне уснă», Г.Кореньков ыйтнисене тивĕçтернĕ халĕ.

Халăхăн тертлĕ пурнăçĕ унăн «Хăрушла сумăр», «Тăлăх арăм», «Уйăх курнă ĕç» поэми-хайлавĕсенче уйрăмах лайăх курăнать. «Тăлăх арăм» сăвă «Хальхи пурнăç» ятпа пичетленнĕ. Унта ялти чухăнсен хуйхи-суйхине витĕмлĕ пайрăмсемпе сăнланă: ани кĕскелсе пырать, тырри çиме çитмест, ачисем çĕтĕк тумлă («витĕр курнаç шăммисем»), чухăнсене кашниех выльăх вырăнне хурать, «эй, эй!» тесе çеç чĕнет. Автор «алăк панчи шăпăр» шутĕнче çӳрекенсене хӳтĕлет, халăх «сутăлса çĕнĕ çула кĕрессе» ĕмĕтленет.

Автор çамрăк ăрăва сутта кăлармa та хĕрӳллĕн чĕнсе калать («Вĕренме чĕнни» сăвă): «Ĕçлес пулать, ачасем!»

Унăн гражданла лирики сатира кĕввисемпе те пуян. Вăл хăйĕн сăввисенче («Савăн» тата «Плешйăрана») ултавçăсене, халăха пусмăрлакансене питĕ хаяррăн питленĕ:

*«Ăсатнă чух хăнуна*
*Чуптума мар, эс ăна*
*«Кучченеç» те тыттаран;*
*Аташсаран çул тупма, –*
*Хăвна пушшех ырлама, –*
*«Фонарьсемпе» ăсатан»;*
*е тата:*
*«Дай бог ватлас кун-çулта*
*Ачу тытса пĕçертме!*
*Дай бог çырма ларнă чух –*
*Ие тыттăр аллуна!*
*Дай бог суда кайнă чух –*
*Шур илтĕрех сан куçна!»*

Çамрăксене уйрăмах Гаврил Кореньковăн юрату лирики илĕртет. Ку темăпа поэт ултă-çичĕ теçетке сăвă çырнă. Совет тапхăрĕччен юрату сăввисем капла нумай çыракан урăх пулман. Чи малтанах вăл çак асамлă туйăм хăватне, илемне палăртать.

*«Эс пур чухне çеç мана*
*Тĕнче чипер курăнать;*
*Эс пур чухне çеç çынна*
*Чĕрем «тăван» пек сунать.*

Çав вăхăтрах ултавлă каччăсемпе хĕрсене те йĕплесе илет.

*«Ĕлĕк мана та чунтан юрататтăн,*
*Пĕр шикленмесĕр пăхаттăн*
*куçран...»*

Унăн юмахĕсемпе поэмисене вуланă май пирĕн ума Гаврил Кореньков мыскараçă-халапçă пек тухса тăрать. Вăл тĕп сюжетра лирикăллă çаврăмсем тума та ӳркенмест.

«Чăвашпа тутар» хайлавра автор хамăр халăх ыттисенчен кая мар тесе шухăшлать. Ку вăл, паллах, революци хыççăн çĕкленнĕ кăмăл.

Гаврил Кореньков поэзие куçарас çĕре самай хутшăннă: «Пулăçăпа пулă юмаххине» тата А.С. Пушкинăн ытти сăввисене, Крыловăн юптарăвĕсене.

Куртăмăр ĕнтĕ, Г.Кореньков пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулнă. Поэзипе вăл ытларах совет тапхăрĕнче ĕçленĕ, темиçе вĕренӳ кĕнеки çырса кăларнă.

2010 çулта Г.Ф. Юмарт Гаврил Кореньковăн 1901-1926 çулсенче çырнă илемлĕ литература хайлавĕсемпе куçарăвĕсене пухса йĕркелет те малтанхи хут уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Унччен вара вулакан Каринкке Кавĕрли хайлавĕсемпе çапла туллин паллашма пултараймастчĕ.

***Микул ЛАРИ.***

* * *

Тем пек лайăх юлташах
Сиен кӳме пултарать;
Вăл каланă пĕр сăмах
Пĕтĕм чуна ярт! касать.

Тем пек лайăх çынна та
Шанса сăмах ан кала.
Чăн çывăх çын пулсан та
Сăмаххуна пит чухла.

Вун сăмахран çиччĕшне
Ху ăшăнтан ан кăлар;
Виççĕшĕнчен иккĕшне
Итту трук ан персе яр.

Юмăш сăмах пĕр тухсан,
Унтан саккăр тăваççĕ.
Çитменнине, май пулсан,
Ырă ятне пăсаççĕ.

## Хăрушла çумăр

Макăр, макăр, çанталăк:
Макăрмалли вăхăт халь!
Ӳкрĕ-ӳкрĕ куççуль тăк,
Савăнмалли сахал халь!

Самани те латлă мар,
Кунĕн-çĕрĕн юн юхать.
Тырри-пулли пит начар,
Вăл та пулин хуралать.

Макăр, макăр, çанталăк!
Макăрмалли вăхăт халь.
Ӳкрĕ-ӳкрĕ куççуль тăк,
Савăнмалли сахал халь.

* * *

В.П.

Санăн сăнна пăхсассăн –
Клеопатра темелле!
Патша ачи курсассăн
Вăл та качча илмелле!

Эсĕ хитре ташлатăн,
Пит типтерлĕ ларатăн,
Калаçма та пĕлетĕн, –
Пит кăмăла килетĕн.

Анчах пăртак куштанрах,
Хăш чух кулса илетĕн;
Тата хăш чух туххăмрах
Сăлтавсăрах питлетĕн.

Эс çаксене пăрахсан,
Ытла ырă пулăттăн.
Пиртен кулма чарăнсан –
Нумай хисеп курăттăн.

## ПУЛТАРУЛĂХ

### Юр çăвать...

Çĕрĕпех тулта юр çурĕ.
– Кăпăшка, шап-шурă юр
Таврана илемлĕ турĕ,
Çывăрса юлан, Якур! –
Шăллĕне Васук каларĕ, –
Хăвăртрах васкар тула,
Хĕл паян пуçланчĕ мар-и,
Тухрĕ йĕлтĕрпе çула.
Эпĕр те унран юлма-и,
Эпĕр те – маттур атьсем!»
Çырмана, юр çунă майăн,
Выртрĕç йĕлтĕр йĕрĕсем.

### Кам

Алăкран такам шаккарĕ,
Кам-ши шуçăмпах килет?
Тен, ку Петĕр тусăм мар-и
Урама тухма чĕнет?
Васкаса чупса пыратăп,
Яр уçатăп алăка.
– Ачасем! Кама куратăп?!
Шаккаканĕ – Улайкка!
Сивĕпе чĕтрет хăй хытă,
Ыйăшать аран-аран.
– Ăшăнма кĕртсем, – тет йытă,
Эпĕ çыртмăп, уç, Çтаппан.

* * *

Эп вăрантăм ир-ирех,
Кантăкран тинкертĕм:
– Çитрĕ, çитрĕ хĕл тинех! –
Йăмăка пĕлтертĕм, –
Ярăпăн эс конькипе
Халĕ ывăнмасăр.
Йăмăкăм мана: – Итле,
Эп те хăрамасăр
Йĕлтĕрпе санпа танах
Ярăнăп сăртран та.
Йывăççем, çĕр шап-шурах,
Хĕл хитре чăнах та.

* * *

Вĕл те вĕл! кăна вĕçеççĕ
Сывлăшра юр пĕрчисем.
Çĕр çине хуллен ӳкеççĕ
Мамăк пек çемçескерсем.
Тин кăна тавра хураччĕ,
Халь вара тĕлĕнмелле:
Вăл шап-шуррăн йăлт шуралчĕ
Илĕртсе сăнĕпеле.
Пӳлĕмре ларас килет-и?
Ытамне чĕнет урам.
Мăшăр йĕлтĕр халь илем те
Ярăнма часрах тухам!

### Юр уçни

Висĕ тантăш – висĕ Павăл
Юр уçаççĕ урамра,
Вĕсене хĕл кунĕ хапăл,
Ĕç вĕрет атьсен алра.
Пĕр сехет патнех уçаççĕ
Кăпăшка юра вĕсем.
Çӳллĕ купасем тăваççĕ
Халь çула тасатнăçем.
Урамри юр катемпи те
Юр уçасшăн вĕсемпе,
Анчах хăй хурланчăк питĕ
Пулăшма май çуккипе.

* * *

Юр çăвать. Кĕрхи тавралăх
Шуралсах пырать куллен,
Йăл! кулса ирех çанталăк
Тулалла чĕнет пӳртрен.
Халь каллех пуçланчĕ мар-и
Кĕтнĕ вăхăт ачасен!
Йĕлтĕрпе вĕсем васкарĕç
Çырмана ял хĕрринчен.

* * *

Акă, кур! Аттеçĕм, кур! –
Ашшĕне калать Якур.
Çавăнтах хăй хăрамасăр
Чăнкă, чăнкă сăрт çинчен
Йĕлтĕрпе пĕр чарăнмасăр
Анчĕ ярăнса хитрен.
Хыçалтан чупан Кампур та
Савăннă Якур пекех,
Питĕнчи кулли çап-çутă,
Ку – асамлă, чăннипех.

### Чăрăш

Яштака та çӳллĕ
Чăрăш пахчара,
Çаврака çут кӳлĕ
Тĕкĕр пек умра.
Ун çине пăхать те,
Чăрăш йăл-л! кулать.
– Кулянма юрать-и? –
Вăл кӳлле калать, –
Сивĕ хĕл пулин те,
Ешĕл эп, куран,
Çавăнпа пĕрре те
Куляну çук ман.

### Уяв

Капăрланнă çӳллĕ
Чăрăш тăрринче
Мĕн кăна çук пулĕ
Çĕн çул каçĕнче:
Çуталаççĕ йăлтăр!
Тĕрлĕ хунарсем,
Хĕрлĕ кантăк çăлтăр,
Чакăр хăюсем.
Чĕр чунсем те йышлăн
Килнĕ елкăна,
Ав, утаççĕ чыслăн
Тилĕпе тăрна.
Мăйăр шĕкĕлчеççĕ
Шухă пакшасем,
Хуппине перессĕ
Çĕрелле вĕсем.
Хăрамасть пĕрре те
Кашкăртан мулкач.
– Юр пике пулап, – тет
Чалăшкуç çак кас.
– Хĕл мучи пулмашкăн
Ман апла тивет, –
Хăйпе хăй вăт кашкăр
Калаçса илет.
– Алла ал тытар та
Ташлама пуçлар,
Ма пĕччен тăратăн,
Чĕрĕп? Аван мар,
Ушкăнпа халь савăн, –
Ват упа калать,
Çĕнĕ çул уявĕ
Шавлăн пуçланать...

***Александр ИЛЬИН.***

АСТĂВĂМ

# Çутă та ырă сăнарĕ яланах асра пулĕ

**2014 çулхи ака уйăхĕн 11-мĕшĕнче паллă чăваш драматургĕ, куçаруçи, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, РСФСР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин халăх писателĕ Николай Терентьевич Терентьев пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.**



Николай Терентьев 1925 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳ уесне (халĕ Канаш районĕ) кĕрекен Кăшнаруй ялĕнче çуралнă. Чурачăкри вăтам шкула, А.В. Луначарский ячĕллĕ Театр ӳнерĕн патшалăх институчĕ (ГИТИС) çумĕнчи чăваш студине, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне, А.М. Горький ячĕллĕ Литература институчĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕсене пĕтернĕ.

Пĕр хушă тăван колхозра счетоводра вăй хунă Николай Терентьевич. Кĕçĕн классен вĕрентекенĕнче те тăрăшнă. Каярахпа К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче актер, литература пайĕн ертӳçи пулнă.

### Драматург, артист, куçаруçă

Николай Терентьевăн пултарулăхĕ чăваш театр искусствине драматургийĕн историйĕнче капашсăр пысăк вырăн йышăнать. Наци драматургийĕн жанрсен анлăшне ӳстерес тĕлĕшпе те чылай ĕçленĕ çыравçă. 50 ытла пьеса тата сценари хайланă вăл. Нумай актлă пур пьесине те республика театрĕсем хапăлланă. Вырăсла куçарнă пьесисем тăрăх лартнă спектакльсене Чĕмпĕр, Ворошиловград, Брянск, Барнаул тата ытти хулара та курнă. «Сансăр пурнăç çук» (1971) пьеса вара аслă çĕр-шывăмăрăн 10 театрне çитнĕ. Унăн произведенийĕсене украинла, эстонла, пушкăртла, черкесла, мордвалла куçарнă.

Чăваш драма театрĕнче çак рольсене калăпланă Николай Терентьев артист: Сентиер (П.Осипов, «Айтар»), Ахмар (В.Ржанов, «Энтип»), Ваня Землянухов (А.Фадеев, «Çамрăк гварди»). Терентьев куçарусă А.Островский, А.Арбузов, А.Софронов, С.Маршак тата ытти çыравçă хайлавĕсенчи сăнарсене чăвашла «калаçтарнă».

### 1950-мĕш çулсем

Мĕнпе палăрса тăраççĕ-ха Николай Терентьевичăн пьесисем? Чи малтанах – ĕçсен хĕрӳ аталанăвĕпе, çĕкленӳлĕхĕпе, ырра шаннипе. Романтика туртăмĕ те юлашки вырăнта мар. Ку уйрăмах геройсен шалти тĕнчине, кăмăлне кăтартнă чухне палăрать. Шăпах Николай Терентьевич этемĕн чунпа чĕм сăн-сăпатне уçса парас, кăмăл-сипет тата философи ыйтăвĕсене ăнлантарас тĕлĕшпе çĕнĕ утăмсем тунă.

«Сиреневая аллея» (1951) пьеса хыççăн Н.Терентьева драматург пек каклама пуçланă. Пултарулăхăн малтанхи тапхăрĕнче (1950-мĕш çулсем) хайланă пьесăсенчен чылайăшне çамрăксене халалланă. К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш драма театрĕнче 1957 çулта лартнă «Арканнă юрату»ре (е «Çунатлисем те çĕр çинчех») ятлă пĕрремĕш спектакльтех куракансем умне яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç тухса тăраççĕ. Вĕсем харсăр та хăюллă, мал ĕмĕтлĕ те тӳрĕ кăмăллă, чăн-чăн туйăмсене парăнма пултараканскерсем. Чылайăшĕ – çĕрпе çыхăннă ĕç çыннисем, рабочисем, интеллигентсем. Тĕп рольте – романтика геройĕ, ырăскер те ăш пиллĕскер. Хĕрарăмсен сăнарĕсене пайăррăн палăртмалла. Вĕсем пушшех те ăнăçлă, чипер. Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенче çырнă ытти пьесăсем: «Ĕлĕкрен туслисем» (1954), «Йăнăш утăм» (1956), «Архип Кузьмич» (1958).

### 1960-70-мĕш çулсем

1960–70-мĕш çулсенче те палăртнă çултан пăрăнман Николай Терентьевич. Ăна çав-çавах кăмăл-сипет ыйтăвĕсем хумхантарнă. «Куккук çаплах авăтать» (1960) героикăллă-романтикăллă трагедире Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин темине хускатнă, пурнăçпа вилĕме, ырăпа усала хирĕçлетсе кăтартнă. Уйрăм сăнарсен шăпи, чун тăрăмĕ урлă пĕтĕм халăхăн паттăрла ĕçне куç умне кăларма пулăшнă вăл. Ку тапхăрта республика театрĕсен сценисем çине «Кĕмĕл пĕлĕтсем» (1973) илемлĕ те хурлăхлă истори, «Тин çеç çуралнисем» (1976) романтикăллă пьеса-репортаж, «Çынпа çын пĕр мар...» (1977) пьеса тухнă.

«Çĕрпе хĕр» (1972) легенда-трагеди Пугачев пăлхавне хутшăннă чăвашсен телейсĕр шăпи пирки хыпарлать. «Хумсем çырана çапаççĕ» (1969) драма И.Я. Яковлевăн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕпе тата Ульяновсен çемйипе паллаштарать. «Çиçĕм хыççăн аслати» (1978) 1917 çулхи Октябрь хыççăнхи пулăмсене уçса парать.

### Пуçăмăрсене таятпăр

Малаллахи тапхăрта çивĕч проблемăсем хускатакан çак тата ытти пьесăсене хайланă Николай Терентьев: «Атăл куçĕ (Манаймастăн сана)» (1980), «Пушар лаши» (1985).

Чăваш халăх писателĕн пултарулăхĕнче фольклор пысăк вырăн йышăнать. Тĕслĕхрен, тăван халăх сăмахлăхĕн йĕркисемпе усă курса «Çĕрпе хĕр» легенда-трагедие хайланă.

Н.Терентьевăн произведенийĕсем «После молнии...» (Мускав, 1981), «Колокола души» (Мускав, 1987), «Суйласа илнисем. 1 том» (Шупашкар, 1994) кĕнекесенче кун çути курнă.

Николай Терентьевич Терентьевăн çутă та ырă сăнарĕ пирĕн асра яланах пулĕ. Вăл чăваш драматурги историйĕн аталанăвне хывнă тӳпе калама çук пысăк. Эпир, çамрăксем, унăн умĕнче пуçăмăрсене таятпăр, хисеплĕ çыравçа тав сăмахĕ калатпăр.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

ТЕСТ

# Юратнă хаçатра ĕçлес килет-и?



Кĕçнерни кунсерен, «Тантăш» хаçатăн черетлĕ номерне илмессерен, эсĕ чăтăмсăррăн страницăсене уçкалатăн, статьясемпе калавсен, пуç ватмăшсен асамлă тĕнчине путатăн. «Паян мĕн çĕнни, интересли кĕтет-ха? Тен, паллакансем пирки çырни пур?» – шухăшлатăн кашнинчех. Чим-ха, самантлăха куçу умне кăларса тăратсам – юратнă хаçат редакцийĕнче хăв та вăй хунă пулсан мĕнлерех ĕçсем пурнăçлăттăн-ха эсĕ? Ыйтăва хуравлама пирĕн тест пулăшĕ.

**1) Юлашки шăнкăрав уявĕ тĕлне класс ертӳçи сана тата класри икĕ хĕр ачана стена хаçачĕ кăларма хушнă. Хăв çине хăш яваплăха илĕн?**

А) Пĕрле вĕренекенсене хушусем парса тухăп, йăлтах ăнлантарăп та ĕç мĕнлерех пынине сăнаса-тĕрĕслесе тăрăп.

Ă) Хаваспах сăвăсем хайлама тата сăн ӳкерчĕксен айне çырма кулăшла текстсем шăрçалама пикенĕп.

Б) Алла кăранташ, фломастер е сăрăсем илĕп те ӳкерме пуçăнăп. Капăр рамкăсем, илемлĕ ӳкерчĕксем – акă мĕн çывăх мана!

**2) Санри чи вăйлă ен:**

А) Эпĕ – питĕ яваплă хĕр ача (арçын ача), çавăнпа шкулти мĕн пур мероприятие йĕркелес ĕçе мана шанса параççĕ. Час-часах шăллăмсемпе йăмăксене пăхатăп. Пĕтĕмĕшле илсен, эпĕ хама çитĕннĕ çын пекех туятăп.

Ă) Мĕн пĕчĕкрен сăвă-калав хайлатăп эпĕ. Ку таранччен темиçе блокнот та çырса тултарнă ĕнтĕ. Шухăшсемпе ĕмĕтсем таçта та илсе çитереççĕ, унтан текстсене сăрхăнса кĕреççĕ.

Б) Эпĕ – илеме çивĕч туякан çын. Яланах хитре япаласене асăрхатăп, ăста ӳкеретĕп. Тен, пуласлăхра дизайнер профессине алла илĕп. Çут тĕнчене илемлĕх парнелес килет манăн.

**3) Шухăша путнă е ĕмĕтленнĕ самантра алă айĕнче хутпа ручка пур тăк ытларах чухне мĕн-мĕн чĕрмелетĕн-ӳкеретĕн?**

А) Тăваткал, виç кĕтеслĕх, хĕрес е урăхларах геометри фигурисем.

Ă) Хаваслă сăн-пит (смайлик) е йăл кулăллă çынсене.

Б) Чечек, чĕре е пĕлĕтсем.

**4) Пуласлăхра хăвна хăш профессии çынни пек куратăн?**

А) Фирма ертӳçи е компани директорĕ.

Ă) Журналист е çыравçă.

Б) Ӳнерçĕ е дизайнер.

**5) Юлташусем сана еплерех хак панă пулĕччĕç?**

А) Харсăр та хăюллă.

Ă) Лăпкă та шухăшлă.

Б) Хаваслă та пултарулла.

*Халĕ пĕтĕмлетĕве пĕлме вăхăт. Хăш варианта (А, Ă е Б) ытларах суйланине шутла та вула.*

Ытларах «**А**» варианта кăмăлларăн тăк эсĕ – **РЕДАКТОР.**

«Тантăш» хаçатра вăй хунă тăк сана ним мар редактор пуканне шанса пама юратчĕ! Эсĕ – ертӳçĕ пулма çуралнă çын. Яваплăх туйăмĕ те пысăк. Кăткăс ларутăруран тухмалли йышăнусене çăмăллăнах тăватăн. Ĕçре сиксе тухакан йывăрлăхсене пĕччен тат-са параятăн, ку пĕртте шиклентермест сана. Тантăшусем эсĕ мĕн каланине итлеççĕ, тăнлаççĕ, вĕрентекенсем вара хисеплеççĕ. Çавăнпа редактор должноçĕ – шăпах сана валли. Редакци ĕç-хĕлне питĕ лайăх йĕркеленĕ, хаçата тата та кăсăклăрах тунă пулăттăн эсĕ.

Ытларах «**Ă**» варианта суйларăн тăк эсĕ – **КОРРЕСПОНДЕНТ.**



Санăн хутлăху – текстсем. Эппин, сана турткалашса тăмасăрах корреспондент ĕçне шанса парĕччĕç. Шухăшусене илемлĕ те тĕрĕс палăртма, яка çырса пама пултаратăн. Ахăртнех, чăваш е вырăс чĕлхипе те литературипе çырнă сочиненисемшĕн учительсем яланах «пиллĕк» паллă лартаççĕ сана. Паллах, нумай вулатăн. Шăп çак енсем пĕлтерĕшлĕ те ăста корреспондентшăн. Интереслĕ те паха статья çырас тесессĕн нумай пĕлмелле. Анлă тавра курăм тата пуян чĕлхе калеме татах та çивĕчлетме пулăшĕç. Вара эсĕ те «Тантăш» вулаканĕсене лайăх заметкăсемпе, калавсемпе савăнтарăн.

Ытларах «**Б**» варианта килĕштертĕн тĕк эсĕ – **ДИЗАЙНЕР.**



Эсĕ ӳнер туйăмĕпе тата шухăш вĕçевĕпе пуян. Кунашкал еннсемпе эсĕ çăмăллăнах дизайнер пулса «Тантăш» хаçата калăплайăттăн. Тĕрĕс те паха сăн ӳкерчĕксем суйласси, статья ячĕсем валли илемлĕ шрифтсем шырасси, страницăсен дизайнне тăвасси – ку ĕçе хавхалансах пурнăçлăттăн эсĕ. Илеме туяс пултарулăху пулăшĕччĕ. Ара, пĕр япала тепринпе еплерех çураçăнса тăнине палăртма, тĕссене суйлама пит аван пĕлетĕн-çке-ха. Сан пултарулăху пирĕн хаçата питĕ кирлĕ!

*Ольга ИВАНОВА хатĕрленĕ.*

ЫТАРЛĂН

## Кам мĕнпе пуян...

Урампа пĕр ăслă этем иртсе пынă. Çавăнтах темиçе çын иртен-çӳрене сăнаса, юмах çапса тăнă. Хайхискерсем ăслă этеме асăрханă та хыттăн, вăл илтмеллех ăна сӳтсе явма пикеннĕ. Паллах, ăслин хăлхине йăлтах кĕнĕ. Анчах ушкăн патĕнчен иртнĕ чухне йăл кулса пурне те сывлăх та ăнăçлă кун суннă вăл.

Çакна аякран сăнаса тăракан та тупăннă. Ăслă çынран тĕлĕнсе çапла ыйтнă вăл:

– Сан пирки мĕнле усал сăмах кăна каламарĕç-ши, эсĕ вара ăшшăн кулса сывлăх сунтăн вĕсене. Нивушлĕ пĕртте тарăхмарăн, çиллenмерĕн?

Ăна хирĕç çапла хуравланă ăслă çын:

– Пасара пырсассăн эпĕ енчĕкре мĕн пуррине çеç тăкаклаятăп. Çынсемпе хутшăннă чухне те çавăн пекех – чун мĕнпе пуян, çавна кăна пайлама пултаратăп эпĕ ыттисемпе.

*Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă*



# Лара Михеенко – пĕчĕк партизанка

*Харсăр çак хĕр ача ятне паянхи ăру пĕлсех каймасть. Вăл вара – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартнă совет çамрăкĕсенчен пĕри.*

Лариса Дорофеевна Михеенко 1929 çулхи çу уйăхĕнче (хăш кунĕ паллă мар) Ленинград облаçĕнчи (халĕ Псков облаçĕ) Лахтăра çуралнă.

1942 çулхи çĕртме уйăхĕнче çуллахи каникула Лара кукамăшĕпе пĕрле Псков облаçĕнчи Печнево ялне куккăшĕ патне хăнана кайнă, вăрçă ахрăмне вĕсем çавăнта кĕтсе илнĕ. Çу вĕçлениччен нимĕçсем çак территорие пĕтĕмпех çавăрса илнĕ.

Ларăн куккăшĕ фашистсене сутăнса вырăнти староста тивĕçне пурнăçланă. Хăйне çак утăмшăн сивлекен ватă амăшне тата пĕртăван хĕрне килтен мунчана хăваласа кăларса янă. Ларисăпа кукамăшĕн йывăр кунсем пуçланнă: кўреннĕ куккăшĕ вĕсене пачах та пăхман. Çимелли çитменрен кукамăшĕпе мăнукĕн çĕр улми хуппипе тата мăян куракĕпе апатланма тивнĕ. Юрать-ха кўршĕсем, хĕр ачан Фросьăпа Раиса юлташĕсен амăшĕсем, май килнĕ таран пулăшнă: сĕтпе çăкăр илсе пынă.

1943 çулхи çуркунне Ларăн юлташĕ Раиса вун улттă тултарать. Часах ăна Пустошкăна çамрăксен ятарлă лагерьне чĕнсе хут ярса параççĕ. Унтан вара аслăрах çамрăксене Германие ĕçлеме яраççĕ иккен. Рая чĕнў хутне юлташĕсене кăтартать. Çак лару-тăру пирки хĕр ачасем тĕплĕн калаçаççĕ, пурне те çавнашкал шăпа çитессе пĕлсе вырăнти партизан отрядне кайма хатĕрленеççĕ. Фросьăн пиччĕшĕ Петр Кондруненко тахçанах ку отрядра тăрать. Хĕр ачасем хăйсем мĕн шухăш тытнине Фросьăн амăшне каласа парсан лешĕ вĕсене партизансене мĕнле тупмаллине ăнлантарать.

* * *

Куккăшĕ Родион Печенево старости тивĕçне йышăннăранпа çулталăк ытла иртрĕ. Ун чухне ăна вăрçă вĕçленнĕн туйăннă. «Нимĕçсем яла çавăрса илчĕç. Эппин, вĕсемпе туслашмалла», – шухăшланă вăл. Халĕ вара хăех курать: вăрçă вĕçленмен, вăйланса çеç пырать.

Пĕррехинче Лара нимĕçсем куккăшне партизансен çул-йĕрне шыраса тупма хушни çинчен илтет. Тепĕр кунне фашистсем тăванĕн çуртне пуçтарăнсан вăл вĕсен кавар шухăшне пурнăçа кĕртме чăрмантарас тесе велосипечĕсен шинисене шăтарать. Лешĕсем çак пуçтахла ĕçе кам тунине пĕлеймесĕр тарăхса каяççĕ. Инçех те мар Родион юнпа вараланнă кĕленче ванчăкне асăрхать. Нимĕçсене каласан ăна партизансем тавăрĕç. Çавăнпа кун пирки сăмах хускатмалла мар. «Хăнасем» кайсанах Родион кил-çуртне пăхса çаврăнать, иккĕленў ан юлтăр тесе мунчана та тĕрĕслет. Куккăшне хăратаканĕ Лара пулнă иккен. Хĕр ача шурă татăкпа чĕркенĕ аллине çурăм хыçне пытарать пулин те куккăшĕ çакна асăрхаса ĕлкĕрет, ăна ятлама тытăнать. Анчах пĕчĕккскертен пур пĕрех каçару сăмахĕ кĕтсе илеймест. Лара куçĕсем, пачах тепĕр май, темĕнле чăрсăррăн çуталаççĕ. Аманнă аллине тек пытармасть вăл, тутăр тĕввине куккăшĕ умĕнче шăлпа туртса салтма тытăнать, ăна пушшех тарăхтарасшăн. Лешĕ вара: «Эпĕ сана кун пирки аса илтерĕп-ха!» – тесе пўрнипе юна-юна килне çаврăнса утать.

Эрне иртсен ялта Германие яма палăртнă хĕрсен списокне вулаççĕ.

– Мĕншĕн Михеенко хушамат икĕ хутчен тĕл пулать? – пăшăлтатать тахăшĕ.

– Пĕри – Раиса, Анна Федоровна хĕрĕ, тепри – Лариса, Анастасия Ананьевна мăнукĕ, Ленинградран килнĕскер.

– Анчах вăл ытла пĕчĕк-çке! Мĕнле чунсăр этем ăна çырса хунă-ши?..

Акă Ларăпа кукамăшĕн пĕрлехи юлашки каç çитрĕ. Хĕр ача юлташĕсемпе вăртăн план хатĕрленĕ, нимĕçсемшĕн ĕçлесе пурăнас мар тесе партизансем патне тухса тарасшăн. Анчах ун çинчен çывăх çыннине калама юрамасть, унсăрăн ыттисем те сисĕç. Кукамăшĕ ирхине вăранĕ, Лара вара килте çук. Рая та çук. Фрося та çук. Хĕр ачасем виççĕшĕ те çухалнă.

* * *

Партизан отрядĕнче хĕрсене хавхаланусăр кĕтсе илеççĕ: вăрманти пурнăçа çăмăл теейĕмĕн-çке, хăнăхманнисем валли мар.

Тепĕр ирхине вĕсене ятарлă ĕç хушса Печеневăна каялла яраççĕ. Отряд ертўçи хĕрсем тек таврăнма хăюлăх çитереймĕç тет. Анчах йăнăшать иккен, вĕсем çаврăнса çитеççĕ, çăмăл тĕрĕслев витĕр тухнăскерсем партизансен шутне лекеççĕ, Тăван çĕр-шыва сыхлама тата тăшмана тĕп тума сăмах параççĕ.



Хĕрсене малтанласа хушнă ĕçсем йывăр мар, анчах синкерлĕ. Пĕррехинче 1943 çулхи çĕртме уйăхĕнче Ларăпа Райăна Орехово ялне яраççĕ. Сăлтавне те шухăшласа тупаççĕ: инкерен купăста калчи ыйтма каймалла. Çав яла нимĕçсем таврари мĕн пур выльăх-чĕрлĕхе хăваласа кĕртнĕ. Карçинкка йăтнă çара уралла хĕр ачасене курсан тăшмансен часовойĕ нимĕн те тĕшмĕртме пултарайман-ха.

Ларăпа Раисăн тĕп тĕллевĕ вара – Ореховори хурал салтакĕсен шутне, пемелли вырăнсем ăçта вырнаçнине, часовойсем хăçан улшăнассине пĕлесси. Разведчиксен ĕçĕ ăнăçнă. Темиçе кунтанах Орехово ялне партизансем персе çитнĕ те фашистсем ял-йышран туртса илнĕ выльăх-чĕрлĕхе пĕр çухатусăрах илсе тухнă.

Тепрехинче Ларăна Чернецово ялне разведкăна яраççĕ. Унта та нимĕçсен çар объекчĕ вырнаçнă. Таркăн пек курăнса пике çак ялта пурăнакан Антон Кравцов патне унăн пĕчĕк ывăлне пăхма вырнаçать. Лара ачана юратса пăхать, хуçисемпе ырă та çепĕç. Ачапа уçăлса çўренĕ чухне вара нимĕç гарнизонĕ пирки чылай информаци пухать.

Унсăр пуçне Ларăпа юлташĕсем листовкăсем те сарса çўренĕ. Çак акцисем ялта ытларах чухне чиркў уявĕсенче, храмра халăх йышлăн пуçтарăнсан иртнĕ. Чухăн çын пек тăхăннă разведчик-хĕрсем çынсем патне пырса кĕсйисене асăрхамалла мар листовкăсем чиксе янă. Пĕррехинче нимĕç патрулĕ Ларăна çак ĕçпе аппаланнă вăхăтра тытнă. Ун чухне вăл тарса ĕлкĕрнĕ-ха.

1943 çулхи çурла уйăхĕнчен пуçласа Ларăн отрячĕ «рельс вăрçине» хастар хутшăнать. Партизансем тăтăшах чугун çула, кĕперсене сирпĕтеççĕ. Хĕр ача çак вăхăт тĕлне хăйне ăста разведчик пек кăтартма ĕлкĕрет, хуть те мĕнле вырăна лексен те çухалса каймасть. Çавăнпа ăна Ахременковăн 21-мĕш бригадине куçараççĕ, унăн тĕп тĕллевĕ – чугун çул çинчи диверси ĕçне тытса пырасси.

Дрисса юхан шыв урлă выртнă чугун çул кĕперне сирпĕтнĕ çĕре Лара та хутшăнать. Ку ĕç Полоцк – Невель лини çинче пулса иртет. Хастар хĕр ача тăрăшнипе кĕпер кăна мар, тăшман эшелонĕ те сывлăша вĕçет. Мина сирпĕтекене ўкĕте кĕртсе вăл хăй çак ĕçе аванрах пурнăçласса шантарнă. Вăр-варскер, пурнăçĕпе сыв пуллашма пултарасса ăнланнă пулин те, поезд çывхарнине курсан кĕпер патне часовой асăрхамалла мар питĕ çывăх пырать те вут-çулăм çўретекен шнура тивертсе ярать, хăй вара каялла хăрушсăр вырăна тарса та ĕлкĕрет.

1943 çулхи чўк уйăхĕн пуçламăшĕнче Лариса икĕ партизанпа пĕрле Игнатово ялне разведкăна каять, вĕсем вырăнти шанчăклă çын патĕнче чарăнаççĕ. Партизансем кил хуçипе калаçнă хушăра Лариса йĕри-тавра сăнать. Кĕтмен çĕртен тăшмансем килсе çитеççĕ, эппин, пирĕннисене такам сутнă. Хĕр ача кун пирки ар çынсене пĕлтерсе ĕлкĕрет, анчах хăй нимĕçсен аллине çакланать. Тан мар çапăçура икĕ партизана та вĕлереççĕ. Ларисăна ыйтса тĕпчеме пўрте илсе кĕртеççĕ. Хĕрĕн пальто кĕсйинче осколоклă граната пулнă, вăл унпа усă курма шухăшлать. Анчах лешĕ темĕнле сăлтавпа сирпĕнмест. 1943 çулхи чўк уйăхĕн 4-мĕшĕнче Лариса Дорофеевна Михеенкона асаплантара-асаплантара ыйтса тĕпченĕ хыççăн персе пăрахаççĕ.

Вăрçă вĕçленсен Полоцк – Невель лини çинчи кĕпере сирпĕтнĕшĕн Лариса Михеенкона Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 1-мĕш степень орденне панă. Псковра ун ячĕпе урам та пур. Мускав çумĕнчи Хотьковăри 5-мĕш шкул умĕнче ăна халалласа палăк лартнă.



Малтанах Калининти 6-мĕш бригада командирĕ Рындин майор «пĕчĕккисене» илесшĕн пулман.

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
15 №, 2014, ака, 17



# Марине чĕппи

Çуллахи ир. Таврара шăп. Хĕвелтен маларах вăранакан ĕçчен вĕçен кайăксен сасси çеç илтĕнет. Часах ял та ыйхă çивиттине сирет. Унта та кунта автан авăтни, калитке чĕриклетни илтĕнет. Турикассем ĕнисене суса урама кăларнă, анаткассене кĕтеççĕ.

Ĕçлĕ халăх çине пăхса савăнакан хĕвел тӳпенелле кармашать. Хăйĕн ачаш шевлипе уçă кантăк витĕр Маринене питĕнчен кăтăклать вăл. Хĕр ача тутлăн çывăрать, тĕлĕкĕнче савăнăçлăн йăл кулса вăраннă пек пулать. Марине ашшĕпе амăшĕ, Петĕр пиччепе Анук аппа, тĕпелте тем çинчен калаçаççĕ. Ашшĕ Маринене кăвакал чĕпписем илсе парас шухăшлă иккен. Вĕсен калаçăвне итлесе хĕр ача каллех ыйхă тĕнчине путать.

... Ашшĕ ăна кăвакал чĕпписем илсе панă пек. Сап-сарă та çемçескерсем урамри симĕс курăк çинче йăпăр-йăпăр чупса çӳреççĕ. Вĕсем хĕр ача пĕçернĕ çăмарта саррине савăнсах çиеççĕ. Унччен те пулмарĕ таçтан пĕр пы-ысăк хура вăкăр сиксе тухрĕ. Вăл хăрушшăн мĕкĕрсе илчĕ те Марине еннелле чупрĕ. Хĕр ача хыпалансах чĕпсене пуçтарма тытăнчĕ, анчах пĕр чĕппи пĕчĕк тяпписемпе тапăлтаттарса вăкăра хирĕç вĕçтерчĕ. Марине ăна тем пек хăваласан та тытаймарĕ. Вăкăр пĕчĕк чĕппе таптаса каçса кайрĕ пек. Марине кăшкăрасшăн пулчĕ. Каллех темĕнле сасă илтсе вăранса кайрĕ.

Пĕр хушă ним ăнланаймасăр маччаналла пăхса выртрĕ. Кĕтĕве каякан выльăхсен сассине илтсе вырăн çинчен сиксе тăчĕ те чӳрече патне чупса пычĕ. Ак тамаша! Тин çеç тĕлĕкре курнă чĕппе таптанă вăкăр каçăралса тăрать. Çитменнине карта çумĕнчи хăйăр купине малти урипе айккинелле сапалать. Марине тарăхса кайрĕ. Ним тăвайманран пĕр вырăнта тапăртатма тытăнчĕ. Çав вăхăтра кĕтӳçĕ вăкăра пушăпа шартлаттарса çапрĕ. Кăмăлĕ тулнă Марине савăннипе алă çупрĕ. Унтан хăвăрт тумланчĕ те кил картине чупса тухрĕ. Вите алăкĕ хупă пулнине асăрхарĕ те:

– Анне, мĕншĕн чăхсене урама кăлармастăн? – тесе ыйтрĕ.

– Чăххисене паçăрах кăларнă-ха, Евтук кинемисен кăвакалĕсем ĕнер пирĕн пата пырса кĕчĕç, хăваласан та тухса каймарĕç. Ним тăвайманран хупса хутăмăр. Халь уçса кăларса ямалла вĕсене, – хуравларĕ амăшĕ.

Марине алăка уçса кăвакалсене урама кăларса ячĕ. Хăй витене çăмарта пуçтарма кĕчĕ. Часах хĕр ача савăнăçлăн юрлани илтĕнчĕ:

" Чăпар чăхă какалать,
Вĕттĕн-вĕттĕн пускалать
Çăмарта туса парас тет..."

Анук аппа хĕрĕ юрланине кăмăллăн итлесе тăчĕ. Унтан хăй те витене кĕчĕ.

– Анне, пĕлетĕн-и, кăвакалсем хăйсене çĕр вырттарнăшăн пире парне парса хăварнă, – терĕ Марине.

– Мĕнле парне? – тĕлĕнчĕ амăшĕ.

– Тăвата́ шап-шурă çăмарта, – кĕтесри йăва çине пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ хĕр ача.

– Вĕсемпе мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? – ыйтрĕ Анук аппа.

– Пĕçерсе çийĕпĕр. Ой, çук, вĕсене чăхха хурса парăпăр та, вăл пире кăвакал чĕпписем пусса кăларса парĕ, – шухăшне улăштарчĕ хĕр пĕрчи.

– Апла çапла тăвăпăр, – килĕшрĕ амăшĕ.

Марине паянхи тĕлĕке аса илчĕ те:

– Эпĕ вĕсене юратса пăхăп, никама та парса ямăп, – терĕ.

Темиçе эрнерен Анук аппа картана кĕрсен чĕпсем шиплетнине илтрĕ. "Халех тухрĕç-ши вара?" – ĕненмерĕ вăл. Чăн та, карçинккара темиçе кăвакал чĕппи ларать.

– Ай, маттурсем! – савăнчĕ Анук аппа.

Чĕпписем чăнах та маттур. Карçинккаран тухнă-тухманах сарлака тяпписемпе тапăлтатса чупма пуçларĕç. Тăвата́ чĕпĕ ытла та сахал тесе Петĕр пичче çав куннех пасара кайса тата вун пĕр кăвакал чĕппи илсе килчĕ. Марине чунтан савăнчĕ. Чĕпсене симĕс курăк çине хăваларĕ, çăмартапа пăтă пĕçерсе çитерчĕ. Вĕсене йытă-качка тытса каясран сыхларĕ.

Кăвакал чĕпписем тухнă хыççăн чăх хăй йăвинче тата темиçе кун ларчĕ. Виçĕ чĕпĕ кăна пусса кăларчĕ: ытти çăмартисем сая кайрĕç. Те амăшĕ пăхманран, те çăмартаран тухсанах хавшак пулнăран иккĕшĕ тӳрех вилчĕ. Пĕрре çеç юлчĕ. Марине ăна питĕ хĕрхенчĕ. Кăвакал чĕпписемпе явăçтарчĕ, пĕрле апат çитерме, шыв ĕçтерме пуçларĕ. Анчах та кăвакал чĕпписем шывра чăмпăлтатма, çăвăнма юратаççĕ-çке. Çавăнпа та пĕчĕк чăх чĕппи Маринепе çӳреме тытăнчĕ. Хĕр ача та ăна пуринчен ытла килĕштерчĕ.

Пĕр ирхине Анук аппа кил картинчи тислĕке тăкма хĕрне хушса хăварчĕ. Марине пахчана тухрĕ. Сухан йăранĕсене çум пуснă иккен. Ăна малтан çумламалла, унтан кăпкалатмалла. Çумлама тытăннăччĕ çеç, урамра машина кăшкăртни илтĕнчĕ.

– Мороженăй сутма килмерĕç пуль унта? – Марине чĕпĕ çинчен мансах сухан йăранĕсем хушшипе урамалла чупрĕ.

Таврăннă çĕре Питититкă пĕтĕм пахчана янраттарса шиплететчĕ. Марине чĕппе пĕччен пăрахса хăварнăшăн хăйне хăй ятларĕ, унтан ăна аран-аран шыраса тупрĕ. "Сарă çăмхаран" каçару ыйтса малалла ĕçе пуçăнчĕ. Питититкă Марине ури çумне тĕршĕнсе çывăрса кайрĕ. Хĕр ача урăх вырăна куçсан ун хыççăн чупать. Кушăхнă тăпра хушăкĕнчен тухакан кăткăсене сăха-сăха илет те каллех хĕр ача ури çумне пырса тĕршĕнет. Çапла иккĕшĕ сухан йăранĕсене çумласа тухрĕç.

Тепĕр кун кунĕпех çумăр çурĕ. Марине çывăрса тăрсан яланхи йăлипе карçинкка патне чупса кайрĕ. Анчах унта чĕпĕ çук. Хĕр ача картише тинкерчĕ. Анук аппа шип-шипе йăвана тухса янине пĕлтерчĕ.

– Йăвара никам та çук вĕт! – кĕç-вĕç йĕрсе ярасла кăшкăрчĕ Марине.

– Унта паян урăх чăх ларнă, – хĕрне лăплантарма тăрăшрĕ Анук аппа.

Марине ăна итлесе тăмарĕ, тумланмасăрах пӳртрен вирхĕнсе тухрĕ. Пĕчĕк чĕпĕ карта алăкĕ çумне лăпчăннă та чуна тивмелле шиплетет. Питититкă хăйне чĕннине илтсе хĕр ача патне чупрĕ. Марине шăнса ĕнтĕркенĕ, сиксе чĕтрекен чĕппе йăтса пӳрте илсе кĕчĕ. Пĕчĕкскере ал шăллипе шăлса типĕтрĕ те карçинккана хучĕ. Хăй канма выртнă амăшĕ çумне ларчĕ. Кăштахран Питититкăна илсе килчĕ, амăшĕн алли çине хучĕ. Пĕчĕкскер ăшша туйса пĕр вырăнта тапăртаткаласа илчĕ те пуçне пӳрне хушшинчен кăларса çывăрса кайрĕ. Марине те амăш çумне кĕрсе выртрĕ.

Марине тутлă ыйхăран вăрансанах апатланчĕ те ĕçе пикенчĕ. Тислĕкĕ нумаях мар пулин те, ĕçлемелĕх пур-ха.

Темиçе сенĕк тислĕк йăтнă хыççăн Марине пĕчĕк чĕпĕ мĕн ĕçленине сăнарĕ. Ах, ухмахскер! Вăл хĕр ача хыççăн йытă çури пек каллĕ-маллĕ чупать иккен.

– Ман айванскерĕм! – тесе Марине пĕчĕк чĕппе хăй çумне çупăрларĕ.

Чĕпĕ амăш çунатти айне лекрĕм тесеши сас пачĕ: "Питититит, питит..."

– Эпĕ сана малалла Питититкă тесе чĕнĕп, юрать-и?

Чĕпĕ килĕшнĕ евĕр хăйĕн пĕчĕк тяпписемпе хĕр ача ал тупанне кăтăкларĕ.

Кил таврашĕнчи ĕçсене вĕçлесен



Каç енне çумăр чарăнчĕ. Хĕр ача Питититкăпа пĕрле тула тухрĕ. Çумăр хыççăнхи сывлăш таса та уçă. Сывлама та çăмăл. Питититкă çумăр вăхăтĕнче тухса выртнă ăмансене çиесшĕн ăшталанать. Анчах лешсем кăшт тĕкĕнсенех авкаланма тытăнаççĕ. Чăх чĕппи хăранипе тӳрех Марине патне чупать. Хĕр ача ăмансене тивме юраманни çинчен ăнлантарса парать. Чĕпĕ, ăнланнă евĕр, хăй чĕлхипе темĕн шиплтесе калаçать.

Тепĕр кунхине Анук аппа кăвакал чĕпписене апат çитерчĕ те курăк çине кайса ларчĕ. Питититкă та унтахчĕ. Кăвакал чĕпписем кĕпĕрленсе вăрăм курăк хушшине кĕрсе кайрĕç. Чăх чĕппи пĕччен тăрса юлнинчен шикленсе-ши шиплетме тытăнчĕ. Анук аппа Питититкăна карçинккана хурасшăн пулса чĕпĕ патне утрĕ. Хăш вăхăтра Питититкăна курак йăтса кайрĕ. Хĕрарăм аллинчи карçинккана пăрахсах курак хыççăн чупрĕ.

– Кша-кша! Чĕппе пăрах!

Курак ăна илтмерĕ тейĕн, йăмра хыçне кайса çухалчĕ. Кĕçех Питититкă та шиплетме чарăнчĕ...

Марине пуринчен ытла чĕппе курак тытса каясран хăратчĕ. Çавăнпа та Анук аппа кун çинчен хĕрне пĕлтерме васкамарĕ. Питититкă çуккине Марине тӳрех асăрхарĕ. Амăшĕнчен те ыйтрĕ. Анчах лешĕ нимĕн те каламарĕ.

– Ăна курак йăтса кайрĕ-ши?

– Аха çав, – хуравларĕ амăшĕ.

Маринен ку хыпара ĕненес килмерĕ. Унăн пĕчĕк те юратнă тусĕ Питититкă çапла çухаласса шухăшламан вăл. Хĕр ача унсăрăн мĕнле пурăнĕ-ши? Маринен куçĕнчен куççуль юхса анчĕ. Кăвакал чĕпписем ним пулман пекех курăк хушшинче кĕшĕлтетеççĕ. Вĕсене курсан Маринен чунĕ кӳтсе килчĕ. Халь кунта Питититкăн та пулмаллаччĕ вĕт!

– Ах, сана сыхласа хăвараймарăмăр, – хĕр ача çĕр çине кукленсе анчĕ.

Вĕри те тăварлă куççуль ирхи тăрă сывлăмпа хутшăнса нӳрлĕ çĕре сăрхăнса кĕчĕ. Сап-сарă кăвакал чĕппи Марине пӳрнине "Ан кулян, эпир пур вĕт-ха!" – тенĕн сарлака сăмсипе таклаттарса илчĕ...

***Оксана ИЛЬИНА.***

**Юля КУЗЬМИНА** (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх шкулĕ) **ӳкерчĕкĕ.**

# Хаваслă 2014 самант

## «Чăваш алфавичĕ» сăмах каçмăш

1. Венгрсен паллă дирижерĕ. 2. Çĕр улмирен пĕçернĕ апат. 3. Пура пайĕ. 4. Вырăс совет писателĕ. 5. Çĕр айĕнчи пурлăх. 6. Лăпкă океан пулли. 7. Китайра кăларма пуçланă пусма-тавар. 8. Итали химик-органикĕ, Нобель премийĕн лауреачĕ. 9. «... лаша кӳлсе тухсан...» (Чăваш халăх юрринчен). 10. Мускаври издательство. 11. Пăлан кӳлмелли çуна. 12. «Хыр» сăмахăн тепĕр ячĕ. 13. Пулă тытмалли хатĕр. 14. СССРти чи паллă футболистсенчен пĕри. 15. Авалхи грексен укçи. 16. Тăхăр музыкçăран тăракан ансамбль. 17. Тӳпери зенита хирĕçле тепĕр енчи точка. 18. Полиграфири пухса хатĕрленĕ текст йĕркисем. 19. Финсен паллă çăмăл атлечĕ, Олимп вăййисенче 9 ылтăн медаль çĕнсе илнĕ спортсмен. 20. Сербсен паллă писателĕ, драматургĕ. 21. СССРти йывăр атлетикăри пĕрремĕш тĕнче чемпионĕ. 22. В.Беллини кĕвĕленĕ опера. 23. Европăри халăх. 24. Чăваш чĕлхинчи татăк.





1. Правительство наградни. 2. Çăткăн вĕçен кайăк, АПШ эмблемин пайĕ. 3. Норвеги тĕп хули. 4. Хорватири хула. 5. СССРпа Франци вăйĕпе тĕнче уçлăхне вĕçтерсе янă спутник. 6. Г.Иванов – ... (чăваш тумĕ, Чĕмпĕр, Сарă Ту, Самар чăвашĕсем çинчен монографисем çырнă чăваш искусствовечĕ). 7. Н.Гоголь çырнă «Тарас Бульба» повеçри сăнар. 8. Нартăна кӳлнĕ пăлансене хăваласа, йĕркелесе пымалли вăрăм патак. 9. Оренбург облаçĕнчи хула. 10. Польша писателĕ. 11. Чăваш летчикĕ, Совет Союзĕн Геройĕ. 12. Африкăри тата Азири вăрăм майракаллă чĕр чун. 13. Норвегири юхан шыв. 14. Селенга юхан шывĕн юппи. 15. Раççей Федерацийĕнчи область центрĕ. 16. Байкал пулли. 17. А.Куприн повеçĕ. 18. ... Дундич. 19. А.Чеховăн «Лаша хушамачĕ» калавĕнчи аран-аран аса илнĕ хушамат. 20. Японири хула. 21. Французсен композиторĕ. 22. Ĕлĕкхи хырçă-марçă. 23. Клавишлă музыка сăпрайĕ. 24. Боливири хула.



1. Çырла. 2. Франци тĕп хули. 3. Паллă совет ăсчахĕ, металлургие çĕнĕ йышши шăрату кĕртнĕ академик. 4. Суту-илӳ вырăнĕ. 5. Радио ăсталаканĕ. 6. Çар çыннин палли. 7. Çар вăййисен смотрĕ. 8. Юхан шыв, тинĕс урлă каçмалли хатĕр. 9. Тĕш тырăсен чечек пуххи. 10. Инкек-синкек, шар. 11. Сунар вĕçен кайăкĕ. 12. Аякран курать, хытă çыртать (туп.юм.). 13. Вăрманти чĕр чун. 14. Вăлта пайĕ. 15. ... хаклă мар, ырă сунни хаклă (ват.сăм.). 16. Асăну сооруженийĕ. 17. П.Хусанкайăн «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕнчи сăнар. 18. Стена çинчи пысăк ӳкерчĕк. 19. Çырла-кăмпа татмалли савăт. 20. Йывăçран касса-чутласа кăлармалли хатĕр. 21. Çăмăл кăпăш чул. 22. Америкăри мăйăр йывăççи. 23. Типографи шрифчĕ. 24. Раççейри область.

## Ребус




## Криптограмма

I. 2, 8, 16 – Çурхи пулăм.
II. 7, 4, 2, 21 – Çыхса е касса тунă илемлĕ япала.
III. 18, 11, 14, 3, 13, 11, 18, 4, 6, 11 – Чечек.
IV. 21, 3, 15, 5, 3, 4, 19 – Илемлĕ юрлакан вĕçен кайăк.
V. 17, 12, 10, 2, 13 – Хитререн хитре, çӳллĕрен çӳллĕ (туп.юм.).
VI. 1, 9, 4, 2, 15, 20 – Çуркунне чечеке ларакан тĕм.
VII. 22, 6, 10, 6, 13 – «... сарăлсан» (А.Емельянов романĕ).

**Çакăнта Раиса Сарпи çырнă сăвă йĕркисем вуланĕç.**



**Çакăнта Иван Крылов çырнă «Акăш, рак, çăрттан» юптарăвĕнчи йĕркесем вуланĕç.**

*Юрий* ***ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**